Константин Иванов // Иванов Н.И. Поэзи сипечӗ / Н.И. Иванов. – Шупашкар, 1982. – С. 29-63.

# Константин Иванов

## Чӗмпӗр ҫинче чӗн вылять

«Чӑтаҫҫӗ-ха чӑвашсем,
Вӗҫнех ҫитмен-ха вӗсем».

Чӑн та, нумай чӑтнӑ, нумай тӳснӗ чӑваш халӑхӗ. Вӑхӑт-вӑхӑт вӑл та ытти халӑхсемпе пӗрле вӑйлӑ шӑв-шав ҫӗкленӗ, вӗҫне ҫитнисем унӑн пӗрре мар пулнӑ. 1905—1907 ҫулсенчи революци вӑхӑтӗнче чӑваш ӗҫхалӑхӗ патша саманине хирӗҫ хаяр кӗрешӗве тухнӑ. Ҫав вӑхӑталла К. Иванов вунпиллӗке ҫитсе пынӑ. Ҫамрӑк пулнӑ вӑл, ҫапах халӑхӑн пӗрремӗш вут-ҫулӑмлӑ революцине хастар хутшӑннӑ. 1905 ҫулхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче, Чӗмпӗр хулинчи мӗнпур ҫамрӑксемпе пӗр каварлӑ пулса, кунти чӑваш шкулӗнчи ачасем те хӑйсем вӗҫне ҫитнине кӑтартаҫҫӗ, вӗренӳ ӗҫне демократизацилеме, шкул программисене анлӑлатма тата шкулта вӗрентекен тӑмсайрах та усал учительсене ӗҫрен хӑтарма ыйтса петици ҫыраҫҫӗ. Ҫакӑн ҫинчен К. Ивановӑн ҫывӑх тусӗ П. В. Пазухин, ҫавӑн чухнехи пӑлхава активлӑ хутшӑннӑ йӗкӗт, ҫапла каласа парать: «Раҫҫейре ирӗклӗхшӗн пыракан юхӑм анлӑран та анлӑ сарӑлса кайрӗ. Ҫӗршыври мӗнпур чухӑн халӑх ҫӗнӗ пурнӑҫа ӑнтӑлчӗ. Вӗренекенсемпе рабочисем тӗрлӗ ҫӗрте, вӑл шутра Чӗмпӗрте те, вӗренме, ӗҫлеме пӑрахма тытӑнчӗҫ. Ҫав хыпар пирӗн пата хӑвӑрт пырса ҫитрӗ те питӗ пӑлхатса ячӗ, вара пирӗн ӑшри тарӑху, пуҫлӑхсене ҫилленни ҫиеле тухмах тытӑнчӗ. Ҫакӑ ремесла училищинче вӗренекенсем занятисене ҫӳреме пӑрахнӑ хыҫҫӑн уйрӑмах палӑрчӗ. Вӗсене кура, пирӗн шкул ачисем те хӑйсен ыйтӑвӗсене шкул пуҫлӑхӗсене ҫырса пама шухӑш тытрӗҫ. Ҫавна пурнӑҫлама тесе хӑйсен ирӗкӗпех занятисене ҫӳреми пулчӗҫ. Аслисем каланине, ӳкӗтленине хӑлхана та чикмерӗҫ вӗсем, хӑйсен ирӗкӗпе занятисене ҫӳреме пӑрахни мӗнпе пӗтесси ҫинчен пӗрре те шутламарӗҫ, революционерсене ытларах итлерӗҫ, кусем пӗтӗм вӑйран пире пӑлхава явӑҫтарма тӑрӑшрӗҫ, хамӑр ӗҫе забастовкӑпа вӗҫлесси патне ҫитересшӗн пулчӗҫ» (1906 ҫулхи январӗн 18-мӗшӗнче И. Я. Яковлев патне янӑ ҫыруран). Ҫав вӑхӑтра К. Иванов Чӗмпӗрти

чăваш шкулĕн пĕрремĕш класĕнче вĕреннĕ. Асрантăнран çивĕч ача, вăл халăх пăлхавĕ мĕнрен тапраннине питĕ лайăх ăнланнă. Тăван халăхăн йывăр шăпи ăна та хытă шухăшлаттарнă; чăваш çыннине усă тăвасшăн, унăн чунне кĕрешӳ вучĕ хыптарасшăн пулнă поэт.

Шкулти аслă класс ачисен пăлхавĕ чăваш поэтне хăпартлантарса ярать. Вĕсен харсăр ĕçне тӳррĕнех хутшăнмасан та, К. Иванов пĕтĕм чунĕпе революци майлă çаврăнать, пăлхавçă ачасен ушкăнĕнчен туха пĕлмест. Вăл вăхăтра халăх хушшинче анлă сарăлнă «Марсельеза», «Варшавянка», «Дубинушка», «Первомайский гимн», «Красное знамя», «По пыльнăй дороге...», «Солнце всходит и заходит...» юрăсем унăн чĕрине хăватлă революци кĕвви пулса пырса кĕреççĕ, тăван халăхăн кĕрешӳри паттăрлăхне тивĕçлĕ сăвăсем çырма хистеççĕ. Вăл вырăс халăхĕн «Дубинушка» юррине пысăк хаваслăхпа куçарать, «Икĕ хĕр», «Тăлăх арăм» тата «Тимĕр тылă» балладăсемпе «Нарспи» поэма ăсталама тытăнать. Пусмăра хирĕç хăюллă çапăçакансене ырлать вăл сăвăпа, «чăн чăвашла сăмахпа» чăваш çынни ăсне туптама, унăн вутлă чунне хавхалантарма тăрăшать поэт. Тăван халăха çĕнĕ юрă, революци юрри кирлине те К. Иванов хăвăртах ăнланса илет. Авалхи юрă чăваш çыннине çĕклеме пултараймасса туять вăл. Унăн «Чăваш марсельезине» çырас ĕмĕт çуралать, çавăнтах поэт хăйĕн маттур шухăшне пурнăçлама тытăнать. Чăваш халăхĕ революци юррисене мĕнле кăмăлланине, вĕсене епле хастар туйăмпа юрланине поэт пĕрре мар курнă, хăй те вĕсене чунтан юратнă. Тайăр Тимкки «Интернационала», «Варшавянкăна», «Хресчен марсельезине», «Рабочисен марсельезине» чăвашла куçарса тăван халăхра сарнине те пĕлнех ĕнтĕ К. Иванов. Чылай вăхăт, 1903—1905 çулсенче, пĕрле вĕреннĕ, пĕрле пурăннă вăл Тайăр Тимккипе, унпа çывăх туслашнă, унпа пĕр шухăшлă, пĕр ĕмĕтлĕ пулнă. Пĕрре мар, астемиçе те, юнашар тăрсах, Тайăр Тимккинчен каярахпа Хусан полицийĕ туртса илнĕ «Песни борьбы» («Кĕрешӳ юррисем») кĕнекери юрăсене уççăн та хăватлăн юрланă. Поэта уйрăмах «Марсельеза» килĕшнĕ.

«Марсельеза» Францире XVIII ĕмĕрти буржуалла революцисен тапхăрĕнче çуралнă, вăл халăха пурнăçри кивĕ йĕркесемпе кĕрешме хавхалантарнă.

XIX ĕмĕр вĕçнелле «Марсельеза» юрă революционерĕсемшĕн те çывăх юрă пулса тăрать. Вĕсем ăна кăшт урăхлатаççĕ, вырăс халăх кăмăлне çывăхрах тăваççĕ. 1875 çултах П. Л. Лавров, унăн кĕввипе усă курса, «Рабочисен марсельезине» хывать, унта тăван халăхне çакăн пек сăмахсемпе хĕрӳлентерет: «Вставай, подымайся, рабочий народ! Вставай на врага, люд голодный! // Раздайся, клич мести народной. // Вперед! Вперед! Вперед! Вперед! Вперед!»

1905 çулхи революци тĕлне вырăс хресченĕсен те хăйсен юрри — «Хресчен марсельези» çуралать. Вăл юрăсене К. Иванов питĕ лайăх пĕлнĕ, вĕсенчи сăмахпа, вĕсенчи кĕвĕпе усă курса, хамăр халăх юррине — «Чăваш марсельезине» çырма пуçланă, çырнă та. «Хресчен марсельезинчен» чăваш поэчĕ пуçламăш çаврана илнĕ, ăна хăйне майлă, чăваша ăнланмалла, унăн кăмăлне тивĕçмелле туса куçарнă та икĕ пая уйăрнă. Хушса юрлама «Рабочисен марселъезинчи» çавра майлă сăвă хывнă. Акă вăл, хамăр поэт тăван халăх ятне çырнă юрă,— революци гимнĕ: «Хура халăха ирĕке янă // Нарсăн вунтăххăрмĕш кунĕнче, // Анчах çĕр халăха пулаймарĕ,— // Ак сире улпутсен ырлăхĕ! // Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем! // Тапран эс вăрçма, выçă халăх! // Халăх хăй çиллине кăтăртăр! // Малалла! Малалла! Малалла! // Хресченсем çĕрсĕр пит аптраççĕ, // Улпутсем уншăн питĕ хавас; // Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ // Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме. // Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем! // Тапран эс вăрçма, выçă халăх!// Халăх хăй çиллине кăтăртăр! // Малалла! Малалла! Малалла!»

Çак юрра, «Чăваш марсельезине», «Интернационала», «Варшавянкăна» урамра та, улах çĕрте те юрланăшăн, хӳлари халăх митингĕсене çӳресе революционерсемпе çыхăннăшăн Тайăр Тимккине часах, 1905 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен кăларса яраççĕ, тепĕр ик уйăхран 2-мĕшпе 3-мĕш классенчи ачасене ноябрĕн 26-мĕшĕнче петици çырнăшăн, шавлă митингсем ирттернĕшĕн, тĕрлĕ революциллĕ прокламацисем вуласа халăх хушшинче сарнăшăн килĕсене салатаççĕ. К. Иванов та хăйне шкултан кăларса ярассинчен ăнсăртран кăна çăлăнса юлать: вăл революци юррисене чăвашла куçарнине никамах та пĕлмен-мĕн-ха. 1907 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче К. Иванов хăйĕн çывăх тăвату юлташĕпе,

никамран ыйтса тăмасăр, хула театрне каять. Унта мĕн пулса иртни паян кун та паллă мар-ха. Анчах çакăн хыççăн К. Ивановăн икĕ юлташне — Иванов Миронпа (Етĕрне уездĕнчи Хучаш ачи) Ферулев Константина (Атрать уездĕнчи Нечасово ялĕнчи çамрăк, унăн револьвер пулнă, вăл ачасем çывăракан пӳлĕмри турăша илсе пăрахнă) шкултан кăларса янă, поэт вара «строгий выговорпа» хăтăлса юлнă тата асăрхаттару илнĕ. Анчах К. Иванов кун хыççăн та шăпăрт çӳремен-мĕн. 1907 çулхи январĕн 10-мĕшĕпе мартăн 5-мĕшĕнче К. Иванов петицисем çине алă пуснă, февралĕн 20-мĕшĕнче вара 1-мĕшпе 2-мĕш класра вĕренекенсемпе, хулари ытти шкул ачисемпе пĕр кăмăллă пулнине кăтартса, уроксене кайман. К. Иванов класĕ хăйне уйрăмах «чăрсăр» тыткаланă. 2-мĕш класрисем вĕренме килĕшмесĕр кăна тăнă пулсан, кусем шкул картишне тухса революци юррисене юрласа çӳренĕ, хытă шавланă, хытă кăшкăрашнă. Михайлов Кирилпа (чăваш) Дерюгин Вениамин (вырăс) шкул çурчĕн чӳречинчен хĕрлĕ ялав кăларса çакнă. Вĕсем ăна çурт çинех хăпартса çакасшăн пулнă, анчах улăхма май пулман пирки кăна çакайман. Паллах, çакă Чăваш шкулĕнче вĕренекенсемшĕн ырăпа вĕçленме пултарайман. И. Я. Яковлева вĕсен «ĕçĕ» хытах пăшăрхантарнă: революци хумĕ чакса пынă вăхăтра хăйĕн шкулне, хĕрĕх çула яхăн сыхласа-упраса усранăскерне, хупса хурасси ăна питĕ шиклентернĕ. 1906 çул пуçламăшĕнче вăл шкула çăлса хăварнă-ха, 2-мĕш, 3-мĕш классене каялла таварма пултарнă. Анчах халĕ ĕнтĕ вăхăчĕ йывăртарах пулнă: хура реакци тапраннă. И. Я. Яковлевăн темле пулсан та шкул ачисен пăлхавĕ çинчен Хусан вĕренӳ *округĕн пуçлăхне пĕлтерме лекет, май тупса, шкул ачисене те тӳрре кăларма тăрăшас пулать.* «Февралĕн 19-мĕшĕнче, каçхине,— тесе пĕлтерет И. Я. Яковлев Хусана,— ман ,пата пуçламăш икĕ класри дежурнăйсем пычĕç те вĕсене юлташĕсем ырана, февралĕн 20-мĕшне, Патшалăх Пухăвне уçнă куна, шкулта вĕренмесĕр уявлама ирĕк ыйтма яни çинчен пĕлтерчĕç. Эпĕ вĕсене апла тума сăлтав çуккине ăнлантарса патăм, вара занятисем яланхи йĕркепех пулма кирлине хытарсах каларăм. Анчах, çакна пăхмасăрах, тепĕр кунне икĕ кĕçĕн, 1-мĕшпе 2-мĕш, класс вĕренме килĕшмерĕ, вĕрентекенсем пырсан, класри ачасем хăшĕ маларах, хăшĕ вĕсен умĕнчех класран мăнаçланса

тухса кайнă. Çапла вара февралĕн 20-мĕшĕнче икĕ класра занятисем пулмарĕç. Аслă класра вĕренекенсем, çавăн пекех шкул çумĕнчи хĕрачасен училищипе икĕ кла слă прихут училищинчи ачаçем, педагогсен курсĕнче вĕренекенсем вăл кунхи пилĕк сехетлĕ занятисем пĕтичченех хăйсене лăпкă тытрĕç.

Мана шаннă шкулти икĕ класра вĕренекенсен чăрсăрлăхĕ çинчен Сире пăшăрханса пĕлтерсе, эпĕ тата çакна хушса каласшăн: ачасем хăйсене çапла тыткалани шкул тулашĕнчи революцилле агитацирен килнĕ, вĕсене хуларан пăлхав шухăшлă прокламацисем ярса тăнă, революци ялавне килсе панă. Вĕренекенсем ăна шкул çурчĕ çине хăпарса çакма хăтланчĕç, çавна тума май килменрен килкартине тухакан чӳречерен кăларса çакрĕç, çитменнине тата, революци юррисем юрларĕç». Çапла, И. Я. Яковлев пĕтĕм айăпа шкул тулашĕнчи, хулари «йĕркесĕрлĕхсене» тăвакансем çине ярасшăн, «февралĕн 20-мĕшĕнче шкулти икĕ класс вĕренме килĕшменни Чĕмпĕр хулинчи мĕнпур шкул ачисен пĕр каварлă пăлхавĕнчен килнĕ» тесе тӳрре тухасшăн. Анчах самана хăйĕннех тăвать— Чĕмпĕр çинче чĕн выляма тытăнать. К. Ивановпа унăн класри пĕтĕм юлташĕсем шкултан тухса ӳкеççĕ, тĕрлĕ çĕре саланса каяççĕ. Шкултан киле кайма панă хут вĕсемшĕн «кашкăр билечех» пулса тăрать: «Ку хута кăтартакана Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен кăларса янă»,— тенĕ-мĕн унта.

И. Я Яковлев Российăри пролетариатăн пĕрремĕш революцийĕн чăн пĕлтерĕшне ăнлансах кайман, Чăваш шкулĕнче вĕренекенсене политика тулашĕнче *тăратса хăварма тăрăшнă, вĕсен 1905—1907 çулсенчи* вырăс революцийĕ çуратнă пăлхавне «Сармантей» халапри çуйăхупа танлаштарнă, çамрăк ăрăва «ăссăр» ĕçрен пăрса хăварма тăрăшнă. Тăван халăха çутта кăларас ĕçе пĕтĕм чунĕпе парăннă И. Я. Яковлевшăн хăй уçнă шкулăн ырă ячĕ, унăн пулас кунĕ-çулĕ темрен те хаклă шутланнă. Çакă ăна Чăваш шкулĕнчи ачасене ӳкĕте кĕртме, революци ĕçне шухăшсăррăн хутшăнма чарса тăма хистенĕ те.

К. Ивановсен класне сыхласа хăвараймасан та, И. Я. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтерсе лартма памасть, вăл хăйĕн «чăваш халăхне наци енĕпе çĕклес ĕçне» (Ленин) малаллах тăвать. Çав чаплă ĕçе революци тапхăрĕнче пăлхава хутшăннă ачасене

те тăташах явăçтарса пырать, вăл вĕсен çулне пĕрре те пӳлме шутламасть. Уйрăмах К. Ивановшăн нумай ырă ĕç тăвать вăл.

1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнчи шăв-шав иртнĕ-иртменех, хура реакци алхаснине пăхмасăр, И. Я. Яковлев К. Иванова Чĕмпĕр шкулне каялла тавăрать, укçасăр-мĕнсĕр тăрантарса усрать, çĕнĕрен вĕренĕве явăçтарса ярать. Çыртарать, куçарттарать, ӳкерттерет. К. Иванов чăн-чăн генилле талант иккенне курать вăл, тăташах пулăшса тăрать: унри поэт хĕлхемне вăйлатса пырать, чăваш культурине çĕклес ĕçе кӳлет, вĕçĕмех ырă сăмахпа хавхалантарать. Кĕске вăхăтрах К. Иванов М. Лермонтовăн «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юррипе» чылай сăввисене (Н. Васильев-Шупуççыннипе пĕрле) кĕнекепе кăларать, «Нарспи» поэмине, «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр» балладисене пичете хатĕрлеме тытăнать. «Пирĕн шкулта хамăрăн поэт тупăнчĕ,— тесе çырать Е. А. Яковлева, И. Я. Яковлев мăшăрĕ, 1908 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче Мускава тăванĕ патне янă çырура,— мĕнле поэтха тата! — теççĕ. Пĕлтĕр шкултан кăларса янă пĕрремĕш класри ача вăл, Константин Иванов ятлăскер, хăех — художник та. Ана шкултах хăварнă, мĕншĕн тесен унăн ниçта вĕренме кĕме те май пулман. Картинăсĕм лайăх ӳкернĕрен ăна пурăнма кĕтес панă, тӳлевсĕрех вĕрентме тытăннă. Çавă ĕнтĕ поэт. Пĕррехинче Иван Яковлевич ачасем çывăрмалли пӳлĕме пырса кĕнĕ. Çав ача, темскер вуласа лараканскер, Иван Яковлевич кĕнине сисмен, курсан — хăраса ӳкнĕ, япалине пытарнă, анчах кайран кăтартнă. Чăваш легендисем пулнă-мĕн вăл, тап-таса чăваш чĕлхипе çырнă... Çав тери илемлĕ те килĕшӳллĕ, ăста рифмăласа çырнă имĕш, ашшĕ (И. Я. Яковлев.— Н. И.) тĕлĕнсе хытсах кайнă, сăввисене пичетлеме шутлать».

Ахăрсамана, М. Горький каларăш, вырăс историнчи усалран усал вунă çул (1907—1917) пуçланнă вăхăт, К. И. Иванова ирĕклĕн çырма хытах чăрмантарать. Вăл ытларах куçарусемпе ларать, ӳкерчĕксем тăвать, 1908 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне, И. Я. Яковлева халалласа, «Хальхи самана» сăвă çеç çырать. Çав çул К. Иванов тăрăшсах халăх учительне тухма хатĕрленет, çĕнĕ çул умĕн Чĕмпĕр кĕпĕрнин пуçлăхĕ

патне çыру ярать, хăйне «политика енĕпе шанчăклă» пулнине кăтартакан хут пама ыйтать. Н. Васильев-Шупуççыннипе иккĕшĕ тăрăшаççĕ вĕсем çав хута илме. Тепĕр поэчĕ К. Иванов пек «пăлхавçах» пулнă, математика учительне тухас ĕмĕтпе пурăннă. Чĕмпĕр çинче чĕн выляни çакăнта та хытă сисĕнет: кĕпĕрне пуçлăхĕ йăпăр-япăрах тыттарса ямасть «пăлхавçăсем» ыйтнă хута, сăнать, тĕпчет, шырать. 1909 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче тин, икĕ-виçĕ уйăхран, «Ĕпху кĕпĕрнинчи Белебей уездне кĕрекен Слакпуç ял çыннинс, Константин Васильевич Иванова, икĕ класлă училищĕн учителĕ ятне илме экзамен тыттарма» ун енчен чăрмав çуккине çырса пĕлтерет. Çакăн хыççăн К. Иванов, тепĕр уйăх экзаменсене хатĕрленсе, Чĕмпĕрти гимнази директорĕ патне каять, ыйту хучĕ хăварать. Çакă 1909 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче, Чĕмпĕр шкулĕнчи ачасен иккĕмĕш пăлхавĕ хыççăн шăпах икĕ çултан, пулнă. Экзаменсем тытма пыма чĕнессе кĕтсе, поэт тата икĕ уйăх ирттерет, апрелĕн 8-мĕшĕнче тин аран-аранах экзаменсем тытма каять. «Юр айĕнчи çын» калав тăрăх вырăс чĕлхипе изложени çырса «пиллĕк» паллă илет, историпе, географипе, арифметикăпа (çырса) тата вырăс чĕлхипе (каласа) экзаменсем ăнăçлă тытать, вырăс чĕлхипе ирттермелли урокăн конспектне меллĕн çырса парать. Анчах хăйне учитель ятне панине кăтартакан хута темĕн вăхăт илеймен пирки К. Иванов Н. Ф. Беляевпа пĕрле çĕр виççе çӳреме Сызрань енне каять, унта Коптеевка ялĕнче выртса-тăрса пурăнать. Кăштах укçа тăвать, вара 1909 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче, виçĕ тенкĕ укçа чиксе, учитель ятне тивĕçĕннине кăтартакан хута ыйтса, Чĕмпĕрти гимназие çыру çырать. Июлĕн 10-мĕшĕнче тинех ăна кĕтнĕ хута ярса параççĕ:

### СВИДЕТЕЛЬСТВО
### № 763

Предъявитель сего крестьянин Константин Васильевич Иванов на основании Высочайше утвержденных 22 апреля 1868 г., 13 декабря 1884 г. и 11 декабря 1895 г., мнений Государственного Совета о специальных испытаниях по министерству народного просвещения, подвергшись полному испытанию в педагогическом совете Симбирской гимназии и выдер-

жав оное удовлетворительно, удостоен звания учителя начальных училищ с правом преподавать в 2-классных сельских училищах министерства народного просвещения.

В удостоверение чего дано, Иванову, это свидетельство за надлежащим подписанием и с приложением печати Симбирской гимназии 1909 г. Июля 10 дня. Гор. Симбирск.

Директор Симбирской гимназии Б. НЕКРАСОВ.

Çапла чăваш поэчĕн халăх учителĕ пулас ĕмĕчĕ пурнăçланать.

К. Иванов тусĕ Н. Ф. Беляев «ят янă» çын пулнă, пăлхава хутшăнса «айăпа» кĕнисен шутĕнче тăнă. Вăл К. Ивановпа çывăхланасси ахальтенех килмен-тĕр. Вĕсем «упа шăтăкĕнче» çу ирттереççĕ, ял çыннисен йывăр пурнăçне хăйсен куçĕпе кураççĕ. Çакă ĕнтĕ поэта унччен акă мĕн калаттарнă: «Эй, самана, самана! // Мĕн кăтартăн малалла? // Хальхи кунсем капла-ха, // Килес кунсем мĕнле-ши?»

К. Иванова хăйне те «килес кунсем» уçăмлă курăнмаççĕ — яла кайса учительте ĕçлĕччĕ вăл — вырăн памаççĕ. Каялла Чĕмпĕре кайĕччĕ — çырма та, ӳкерме те чăрмавлă унта. 1910 çулхи кĕрчченех поэт тăван ялĕнче пулать, çĕрĕçĕ тăвать, аппĕ-амăшĕпе пĕрле çурт-йĕр лартса тăрмашать. Анчах... хăйне учитель ĕçне ярасси курăнмасть-ха унăн. Вăл каллех И. Я. Яковлева тилмĕрме тытăнать, Чĕмпĕрех таврăнасшăн вăл: çакăнта-çке-ха халĕ чăвашăн тĕп хули, культура вучахĕ, аслă чăваш шкулĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче К. Иванов Чĕмпĕре çитет те каллех, учительте ĕçлес шанчăка çухатсах темелле, куçару ĕçне кӳлĕнет. Йывăр самана чулĕ пусарсах хурать поэта. Пĕтĕм çĕршыв тамăкри пек курăнса тăрать ăна. И. Я. Яковлев чунтан пулăшĕччĕ,— Чăваш шкулĕнче пушă вырăн çук-ха халлĕхе, тата «пăлхавçă» ят та, К. Иванов çумне 1905—1907 çулсенче çыпçăннăскер, унăн аллине çыхса тăрать: хура кунсем иртсе каймасăр К. Иванова ĕçе вырнаçтарасси пирки сăмах хускатма пĕртте çăмăл мар.

1911 çулхи август уйăхĕ, кĕçех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланмалла. Чăваш шкулĕнче чистописани, рисовани, черчени вĕрентекен В. И. Иванов Мускава кайма тапранать. Тинех И. Я. Яковлев К. Иванова учителе

лартма тăрăшса пăхма пултарĕ: çын çукран тата вĕренӳ çулĕ çывхарса килнĕ пирки çав ĕçе майлама, тен, пысăк чăрмавах пулмĕ. Анчах халĕ те И. Я. Яковлевăн чылай вăй хума тивет — «кăвак мундирсем» сыхах-мĕн-ха, вĕсене ӳкĕте кĕртме çăмăлах мар — хăйсен ĕçне «тĕплĕ» тума хăнăхнă вĕсем. Августăн 11-мĕшĕнче И. Я. Яковлев шкулти географипе истори учительне В. Н. Никифорова, хăйĕн вырăнне вăхăтлăха юлнăскере, Чĕмпĕр кĕпĕрнин пуçлăхĕ патне К. В. Иванова Чăваш шкулĕнчи икĕ класлă училищĕн учительне лартма ыйтса çыру çыртарать: пуçару хăйĕнчен тухнине питех пĕлтересшĕн пулман вăл. Пĕр кун иртет, иккĕ, виççĕ, кĕпĕрне пуçлăхĕ апла та, капла та сăмах каламасть. Ыран вĕренӳ çулĕ пуçланать тенĕ кун И. Я. Яковлев чăваш поэтне никамран ыйтса тăмасăрах хăйĕн шкулне ĕçе илет. «Çут ĕç министерствине пăхăнса тăракан халăх училищисен учителĕ ятне илнĕ К. В. Иванова,— тесе тулли савăнăçпа çырать И. Я. Яковлев 1911 çулхи августăн 31-мĕшĕнче.— Сире сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕ çумĕнчи Хĕрачасен икĕ класлă прихут училищинче рисовани, черчени тата чистописани учителĕн вырăнне вăхăтлăха илнине пĕлтеретĕп. Ĕç укçи çулталăкне 240 тенкĕ». Çакăн хыççăн, сентябрĕн, 20-мĕшĕнче, К. Иванов хутне кĕрсе, И. Я. Яковлев Чĕмпĕр кĕпĕрнин пуçлăхĕ патне официаллă йĕркепе мар, çапла çырса ярать: «Иванова эпĕ лайăх пĕлетĕп,— 1910 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнченпе вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пурăнать, хăйне йĕркеллĕ тытать, политика енчен шанчăклă. Çавăнпа та эпĕ Сирĕнтен, сентябрĕн 1-мĕшĕнче занятисем пуçланнине кура, Иванова вăхăтлăха ĕçе илме ирĕк пама ыйтатăп. Ун çинчен калакан кирлĕ хутсем килсе çитиччен ăна эпĕ хамах сăнаса тăнă пулăттăм»,— тет. Хальхинче кĕпĕрне пуçлăхĕ хăвăртах (сентябрĕн 21-мĕшĕнче) ответлет, К. Иванова ĕçе илме чăрмав тумасть, анчах поэт çинчен «кирлĕ хутсем» пухма хĕрсех пуçăнать. Çав ĕçе вăл августăн 17-мĕшĕнчех тытăннă пулнă-ха. Кĕпĕрне пуçĕн канцелярийĕнчен çав кун Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи жандармсен управленине хут яраççĕ, К. В. Иванов политика енчен мĕнле шанчăклине пĕлтерме ыйтаççĕ. Çавăн евĕр хутах Чĕмпĕр полицийĕ те илет. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи жандармсен управленийĕ авгус-

тăн 24-мĕшĕнче хăйĕн шухăшне пĕлтерет; полици управленийĕ вара Ĕпхӳ хулипе хут çӳретсе илнĕ хыççăн кăна К. В. Иванов çинчен тĕплĕ хурав тăвать. «Константин Васильевич Иванов, Ĕпхӳ кĕпĕрнине кĕрекен Белебей уездĕнчи Слакпуç ял хресченĕ,— тенĕ унта,— Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче 1903 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 1907 çулхи март уйăхĕччен вĕреннĕ, ытти хĕрĕх ачапа пĕрле петици панăшăн ăна шкултан кăларса янă. Вăл, тăван ялне таврăнса, унта 1907 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен пурăннă. Чĕмпĕре каялла таврăннă хыççăн ăна Чăваш шкулĕнче куçаруçă ĕçне хушнă. Шкулта пурăнса, икĕ класлă шкул учителĕн ятне илме экзаменсене хатĕрленнĕ, вĕсене 1909 çулхи апрель уйăхĕнче тытнă. Экзаменсем хыççăн, 1909 çулхи апрель уйăхĕнче, тăван ялне таврăннă, унта 1910 çулхи октябрьччен пурăннă, ашшĕне ялхуçалăх ĕçĕнче пулăшнă. 1910 çулхи октябрьтен пуçласа паянхи кунччен чăваш шкулĕн куçаруçинче тăрать.

Чĕмпĕре юлашки хут пурăнма куçнăранпа Иванов хăйне йĕркеллĕ тытать, судпа айăпланмасть, унччен те айăпланман, йĕркерен тухса хăтланмасть, лайăхах пурăнать.

Шкултан кăларса янă ачасем хăйсен петицинче Чăваш шкулĕнче ĕçлекен пĕр преподавателе ĕçрен кăларса яма ыйтса çырнă...»

Ĕпхӳ кĕпĕрне пуçлăхĕ те вăрттăн хутпа К. Иванов çинчен ырă çырса янă. «Константин Васильевич Иванов,— тет вăл,— Ĕпхӳ кĕпĕрнинче пурăннă вăхăтра— малтан 1907 çулхи мартран пуçласа сентябрĕн 1-мĕшĕччен, кайран 1909 çулхи апрельтен пуçласа 1910 çулхи октябрь уйăхĕччен — хăйне нимле усал енĕпе те кăтартман, политикăна сывăх ĕçсемпе айăпланман».

Çапла Чĕмпĕр «кĕпĕрне хуçи» тинех К. В. Иванов çинчен «кирлине» пĕлсе çитет,— вăл 1909 çулхи çу кунĕсене Н. Ф. Беляевпа пĕрле Сызрань таврашĕнче çӳренисемсĕр пуçне,— вара Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторне икĕ-виçĕ сăмахпа «К. В. Иванова, унччен вăхăтлăха учитель ĕçне илнĕскере, службăна яланлăхах вырнаçтарас енĕпе манран чăрмав çук»,— тесе 1911 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче, малтанхи хута янăранпа тăвată уйăха яхăн иртсен, ирĕксĕртереххĕн пĕлтерет. Çапах та К. В. Ивановăн ĕçĕ каплах татăлса пĕтмест. И. Я. Яковлев Чĕмпĕр кĕпĕрне пуçлăхĕн

хутне илнĕ хыççăн аранах Хусан вĕренӳ округне поэта ĕçе вырнаçтарас ыйтăва тăрататъ, хăйĕн аллинчи мĕнпур хутсене унта ярса паратъ. Çырăвĕнче К. Иванова вăл ырăпа çеç хаклать: «...эпĕ Иванова лайăх пĕлетĕп, мĕншĕн тесен вăл ĕлĕкрех мана шаннă шкулта вĕреннĕ. Вăл — сăпайлă, ĕçчен, тĕне ĕненекен çын, хитре çырать тата ӳкерет»,— тесех мухтать. 1911 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче Хусан вĕренӳ округĕнчен К. В. Иванова ĕçе илес ыйту татăклă вĕçленни çинчен çырса пĕлтереççĕ.

Çапла асаплăн К. В. Иванов учителе тухать, И. Я. Яковлевпа алла-аллăн тытăнса, «хăй шухăшне хăварса», халăх ĕçне тума тытăнать, 1915 çулхи март уйăхĕнче чирлесе çĕре кĕрicченех çак ĕçрен татăлмасть. Чĕмпĕр çинче чĕн вылянинчен хăраса тăмасть вăл, чаплă вырăншăн çунмасть, чĕрине шăнтса чĕрĕ вилене тухма памасть хăйне чăваш халăх поэчĕ.

## Реализм хăвачĕ

### К. В. Ивановăн «Нарспи» поэминчи идейăпа форма пĕрлĕхĕ

К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине асăнсан, тӳрех Октябрьти социализмлă аслă революцичченхи чăваш литератури мĕнле çулпа аталанса пыни тата вăл еплe шая çĕкленни çинчен сăмах пуçланать. И. Я. Яковлевăн «Сармантейпе» М. Ф. Федоровăн «Арçури» балладинчен тытăнсах пирĕн ĕлĕкхи литература тăван халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнура пулни курăнать. Пурнăç чăнлăхĕпе форма илемлĕхĕ (композиципе сюжетăн çирĕп тытăмĕ, сăнарсен типлăхĕ, чĕлхе витĕмлĕхĕ) тĕлĕшпе вара «Нарспи» поэма çав вăхăтри мĕнпур произведенисенчен те çӳлерех тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ вăл чăваш поэзинче паллă вырăн йышăнчĕ, тĕнче литературинчи чаплă поэмăсен шутне кĕчĕ. «Нарспи» поэма вырăсла темиçе хут пичетленчĕ, ăна акăлчанла, французла, нимĕçле, пăлхарла, венгрла вулаççĕ. «Нарспи»,— тенĕччĕ вырăс совет поэчĕ А. Твардовский,— вăйлă та хăй евĕрлĕ произведени, унта халăх поэзийĕн пуянлăхĕпе ырă еткерĕ курăнать. Поэма мул тĕнчине хирĕç, революцичченхи чăваш йăлĕнчи тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхе хирĕç кĕрешме чĕнет, саманан пысăк ыйтăвĕсене хускатать». Латви халăх поэчĕ Ян Судрабкалн, чăваш поэчĕн кĕске те

йывăр пурнăçĕпе паллашса, унăн поэмине вуланă хыççăн çапла каланă: «Кивĕ элчел Константин Иванова ытла та хĕссе-пĕссе панă-мĕн пурăнмалăх çулне. Анчах поэт халăхра çĕн шухăш хускатма ĕлкĕрнĕ. Унăн «Нарспи» поэми чĕрене илĕртет, чуна уçса, çĕклесе ярать». Хамăрăн паллă поэтсем те К. Иванов поэмине питĕ пысăка хурса хакларĕç. Вăл, чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай каларăш, хăйĕн чăн-чăн халăхлăхĕпе, çăмăл вуланăвĕпе, пысăк туйăм çуратакан хăвачĕпе, композици çирĕплĕхĕпе, пейзаж илемĕпе, сăнарсен хитрелĕхĕпе тата курăмлăхĕпе, вĕсен характер уçăмлăхĕпе, социаллă пурнăçран тухса тăракан трагедиллĕ сюжет çивĕчлĕхĕпе, çавăнпа пĕрлех тăван халăх пурнăçне, унăн кăмăлне питĕ сăпайлăн та шайлăн сăнласа кăтартас ăсталăхĕпе тыткăна илет. «Нарспи» поэмăн тĕнче поэзийĕнчи паллă вырăнне хакласа, тата çакна та калăттăмăр: К. Иванов хăй вăхăтĕнчи чăваш пурнăçне, унăн ĕçне-хĕлне, йăли-йĕркине питĕ аван пĕлнĕ, çавсене истори енчен тĕрĕс пăхса хаклама пултарнă. Мул хуçисен тĕнчи мĕнле тытăнса тăнине, çынсем хушшинчи çыхăну-тытăçусем мĕнрен килнине витĕр курса тăнă вăл. Хальхи самана— мĕнпе паллă вăл? Кам хуçа унта, кам — тамăкра? Хальхи саманана халăх мĕнле курать, мĕнле шухăш, мĕнле туйăм пăлхатать ăна? Çаксем пĕтĕмпех «Нарспи» поэмăра тĕпре тăраççĕ, унăн идейине уçса пăраççĕ. «Кĕçке ĕнтĕ куçĕсем // Уçăлаççĕ чăвашсен. // Кĕçке курма пуçларĕç, // Тĕнче кура пуçларĕç»,— тесе çырать К. Иванов «Хальхи самана» сăвăра. Поэтăн çак паллă сăввинчи шухăшсем «Нарспи» поэмăра тарăнрах та курăмлăрах аталанаççĕ, чăваш ялĕн пурнăçĕнчи ырă та усал енсене çынсен тĕрлĕ характерĕсенче палăртса тăраççĕ. «Чăтаççе-ха чăвашсем, // Вĕçнех çитмен-ха вĕсем. // Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух, // Ĕçсе-çиге ларнă чух // Юррисене юрлаççĕ, // Куççулĕпе кулаççĕ. // Чăваш! сана ун чухне, // Чуну çĕкленнĕ чухне, // Мĕн пит асна килет-ши?// Мĕн пит чунна хĕсет-ши? // Савăнăç-и, куççуль-и // Сан куçунта куç тулли?»

Куна та К. Иванов «Хальхи саманарах» калать. «Нарспи» поэмăра вара йывăр пурнăçа чăтса пурнакан, «вĕçнех çитмен» чăваша мĕн пит асне килнине, мĕн пит чунне хĕснине Силпи ялĕнчи халăхпа Нарспи тата Сетнер сăнарĕсемпе кăтартса парать. Çакăнтан

тухса тӑрать те «Нарспи» поэмӑн историзмӗ, унӑн реализм хӑвачӗ.

«Нарспие» чӑваш литература тӗпчевӗпе критики, сӑмахран, М. Я. Сироткин, Н. С. Павлов, В. А. Долгов, В. Я. Канюков тата ытти тӗпчевҫӗсем, тивӗҫлипе хакларӗҫ, унӑн пуян содержанийӗпе илемлӗх формине пӗрлӗхлӗн тишкерсе кӑтартрӗҫ. «К. Иванов пултарулӑхӗ чӑн-чӑн пурнӑҫпа ҫирӗп ҫыхӑннӑ,— терӗ М. Я. Сироткин.— Вӑл ҫырнӑ мӗнпур пысӑк калӑпла произведенисем халӑх пурнӑҫне сӑнлаҫҫӗ, поэт пурӑннӑ вӑхӑтри социаллӑ, типлӑ конфликтсене кӑтартса параҫҫӗ». Тӗпчевҫӗ ҫакна та палӑртнӑччӗ: «К. Иванов пултарулӑхне тӗпчекенсем хушшинче, калас пулать, темиҫе ҫул каялла кӑна, вӑл ҫырнисем, вӑл шутра «Нарспи» поэма та, поэтӑн хӑйӗн вӑхӑчӗпе ҫыхӑнман, унта чӑваш халӑхӗн тахӑш ӗмӗрти патриархаллӑ пурнӑҫӗ сӑнланса юлнӑ тесе ҫине тӑрсах витерчӗҫ, вӗсем поэт хӑй саманинчи ҫын пулнине курмарӗҫ».

Шел, К. Иванов произведенийӗсене, унӑн «Икӗ хӗр», «Тимӗр тылӑ» тата «Тӑлӑх арӑм» балладисемпе «Шуйттан чури» трагедине, «Нарспи» поэмине, поэт пурӑннӑ вӑхӑтран уйӑрса хакласси халӗ те сисӗнкелет-ха. Пӗрисем ҫав произведенисен реализм вӑйне чакарма пӑхаҫҫӗ, вӗсенче романтизм витӗмне шыраҫҫӗ. Теприсем «Нарспи» поэмӑрах, акӑ, «самана паллисене» тупаймасӑр хӑшкӑлаҫҫӗ, ӑна унчченхи ӗмӗрсенчи тӗрлӗ юхӑмсен тӗкӗрӗнче кураҫҫӗ. «Нарспи» поэмӑра,— тет Г. Я. Хлебников,— истори аталанӑвӗ, общество пурнӑҫӗнчи шӑв-шав пачах та сисӗнмест темелле. Поэт сӗм аваллӑха сӑнланӑн туйӑнать». Тепӗр ҫӗрте вӑлах: «Поэмӑра власть ҫыннисем, ҫӗнӗ тӗн сарӑлни, наци интеллигенцийӗн ӗҫӗ-хӗлӗ, урӑхла каласан, халӑхӑн историри пурнӑҫӗн паллисем, курӑнмаҫҫӗ»,— тесе хушса хурать. Г. Я. Хлебников шучӗпе, К. Иванов поэминче критикӑлла реализма кӑна курни тӗрӗсех мар, унта критикӑлла реализмпа Возрождени тапхӑрӗнчи реализм хӑйне майлӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Е. В. Владимиров, К. Ивановӑн «Нарспи» поэмине реализмла произведенисен ретӗнчех курса та, ӑна «пӗр-пӗр историлле тапхӑрпа ҫыхӑнтарма йывӑр» тесе ӗнентересшӗн. Ҫакӑ мӗнрен килни паллӑ. Нумайӑшӗ, уйрӑмах «Нарспи» поэмӑра «самана паллисене» тупайманнисем, К. Иванов ҫырнисем илемлӗ

литература произведенийĕсем пулнине асра тытмаççĕ, вĕсенче «самана палли» тĕрлĕ япалара: çавăн чухнехи çутçанталăк сăнĕнче, хулапа ял, кил-çурт, урам-карташ сăпатĕнче, çипуçпа апат-çимĕç тĕсĕсенче, халăх йăли-йĕркисенче, уйрăмах çынсен характерĕсенче палăрса юлма пултарнине çителĕклĕ шута илмеççĕ е пачах манаççĕ. «Самана паллисем» чĕлхере те чылай тупăнаççĕ. «Нарспи» поэма чĕлхинче, сăмахран, çав паллăсем куçкĕретех тухса тăраççĕ. Акă вулатпăр: «Силпи ялĕ — пуян ял, // Ларать вăрман ăшĕнче. // Кантур пекех çурчĕсем // Ват йăмрасем айĕнче. // Ялĕ тавра укăлча, // Çĕнĕ çатан укăлча, // Кив капанлă анкарти, // Тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча. // Аслă урам тăршшĕпе // Хăма витнĕ çурчĕсем, // Урам икĕ айккипе // Ем-ешĕлех сачĕсем. // Çуртсем тавра килкарти // Чул хӳме пек çавăрнă. // Сарă хапха килсерен // Чĕнтĕрленĕ тăраллă. // Силпи ялĕ — аслă ял, // Хула тейĕн инçетрен. //Ахăр, кунти чăвашсен // Мулĕ пуртăр çав вĕсен».

Кунта кашни сăвă йĕрки тенĕ пек «самана паллиллĕ». «Кантур» сăмах чăваш чĕлхине XVIII ĕмĕрте çеç кĕме пултарнă. I Петĕр патша çак ĕмĕр пуçламăшĕнче тĕрлĕ реформăсем кăларать, урăх патшалăхсемпе çине-çине вăрçă вăрçса, халăха йывăр пусмăра кĕртсе ӳкерет, унран çĕнерен çĕнĕ налук пуçтарать. Чăваш пек халăхсенчен нумайăшĕ патшалăх аллине кĕрсе патша çыннисене пăхăнса пурăнма тытăнать. Вĕсене çĕнĕ хуласемпе крепоçсем, тинĕс порчĕсемпе çар хӳтĕлĕхĕсене тунă çĕре хутшăнтараççĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ чăваш тăрăхĕнче кантур çурчĕсем лартаççĕ. XVIII ĕмĕр вĕçĕнче чăваш çынни удел хресченĕсен шутне кĕрет. Çапла чăваш чĕлхине «кантур» сăмах ĕмĕрлĕхех вырнаçать. «Урам тăршшĕпе» тата «урам икĕ айккипе» сăмах тытăмĕсем чăваш чĕлхине XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенчен пуçласа кĕнĕ пулĕ тетпĕр. Чăваш ялĕсенче çак вăхăтчен хальхи евĕр икĕ ретлĕ урамсем пачах та пулман, тăван-пĕтен ытларах хăйĕн тĕп килĕ тавра вырнаçнă, ушкăн-ушкăн пурăннă. «Ялĕ тавра укăлча», «кив капанлă анкарти», «тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча» тăвасси те, килсерен «чĕнтĕрленĕ тăраллă сарă хапха» лартасси те çав вăхăтранах пуçланса кайнă-тăр. «Хулапа» «мул» сăмахсем чăваш чĕлхине хăйсен çĕнĕ пĕлтерĕшĕсемпе кĕни вара тӳрремĕнех пирĕн таврара, чăваш хушшинче, капита-

лизм аталанма тытăннипе çыхăннă. Вăхăт паллине «Нарспи» поэмăри тата ытти нумай сăмахсенче курма пулать. «Çĕрме пуян», «Пĕтĕм ялта пĕр пуян», «Укçапала эрехех çынна ăсран кăларать», «Икĕ пуян пĕрлешсен, шеп те пулĕ туй! — теççĕ», «Анчах асту: Михетер хĕрне памасть çукалла», «Хăйсен пуянлăхĕпе Пăрăнаççĕ çук çынран»,— çаксем пурте поэмăри ĕçсем класс кĕрешĕвĕ уйрăмах хĕрсе çитнĕ вăхăтра, тĕрĕсрех каласан, капитализм саманинче пулса иртнине астутараççĕ. Пĕр-икĕ сăмах К. Иванов поэминчи чăваш килĕ-çурчĕ çинчен каламалла: вĕсем те — «самана паллисем», унти ĕçсем хăш вăхăтра пулнине кăтартаканскерсем. Михетере илер акă: «Унăн çурчĕ хула пек, // Кĕрсен, витĕр тухма çук. // Карташ тулли япала // Купаланса выртаççĕ, // Кĕлет тулли тырри-сем // Тăкăнас пек тăраççĕ. // Урхамах пек лашисем // Утă-сĕлĕ çиеççĕ, // Унăн выльăх-чĕрлĕхсем // Пичĕке пек çӳреççĕ. Тури касри çак кил-çурт // Аякранах курăнать...» Пӳртре унăн «икĕ пысăк кăмака». Килкартинчех — авалхи хура пӳрт. Кун пек хура пӳртсем чăваш тăрăхĕнче ĕлĕкрен пулнă. Вĕсене шалти вучахпа ăшăтнă, тĕтĕм тĕнĕ витĕр тулалла йăсăрланса тухса тăнă. Шурă та пысăк кăмакаллă çуртсем, тĕтĕме мăрьерен кăлараканнисем, XIX ĕмĕрте те чăваш ялĕсенче питĕ сахал пулнă. Н. В. Никольский тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, унашкал кăмакасем тăвасси чăваш ялĕсенче иртнĕ ĕмĕрĕн варринче кăна тапраннă, ĕмĕр вĕçнелле вара халăх хушшинче анлах сарăлса кайнă. Сăмахран, хальхи Етĕрне районĕнчи Шăмат тăрăхĕнче 1840 çулта шурă кăмакаллă çуртсем 7% шутланнă, 1903 çулта вĕсен шучĕ 53% çитнĕ. «Нарспи» поэмăри чăваш ялĕнче, паллах, Михетерпе Тăхтамансем çеç «хула пек» пысăк кил-çурт çавăрма пултарнă. Сетнер йышши чухăнсен «пĕчĕкçеççĕ хура пӳртсенчех» пурăнма тивнĕ. К. Иванов Силпи ялĕнчи çуртсем çинчен каланă чухне вĕçĕмех кунта саксем пуррине асăнать. Тĕслĕхрен, «Пĕчĕкçеççĕ хура пӳрт, // Шурă старик с а к çинче», // «Ларать карчăк с а к çинче // Урлăпирлĕ тайăлса». Çавăнпа пĕрлех Силпипе Хушăлка чăвашĕсем çуртра сĕтел лартнине те тăтăшах куратпăр. «Туйне туса Тăхтаман // Ларать с ĕ т е л хушшинче. Тĕрлĕ апат айĕнче // Çăка с ĕ т е л авăнать»; «Сетнер пĕчĕк пӳртĕнче // Вĕсем иккĕш лараççĕ. // Лутра с ĕ т е л хушшинче // Каçхи апат тăваççĕ. //

Сетнер ватă амăшĕ // Турăх тупрĕ кӳршĕрен, // Çăкăр-тăвар кăларса // Хучĕ сĕтел ăшĕнчен».

«Сак» — авалхи тĕрĕк сăмахĕ (секӳ — выртса тăма тăмран-темрен тунă çӳллĕ вырăн). «Нарспи» поэмăра саксене пӳрт йĕри-тавра лартса тухнă (ĕлĕкавал сак тĕпелте кăна пулнă). Çапла, çакă та çĕнĕ вăхăт палли шутланать. «Сĕтел» — вырăс сăмахĕ. Сĕтелпе чăваш хăш вăхăтран пуçласа усă курма тытăнни пирки иккĕллĕ шухăш пулма пултараяс çук-тăр: вырăссенни пек аслă та пысăк çуртсем лартма пуçланă тапхăрта тин сĕтел пурнăçра усă куракан япала пулса тăнă. Кĕлет пирки те çавнах каламалла. Кĕлетсене малтан пуян Михетерсемпе Тăхтамансем кăна лартма пултарнă: ниçта чикме çук мулне-пурлăхне вĕсен унта питĕрсе сыхласа упрама тивнĕ-çке. Япалана питĕрсе усрас йăла чăвашăн авал пулман, теççĕ. Çуклăхпа пуянлăх самани, уйрăмах капитализм тĕпчи, çуратнă ăна. «Ваттисене асăнчĕç // Авалхисен йĕркипе. // Унтан туя пуçлама // Кĕчĕç шурă кĕлете», // «Тăхтаманпа Нарспие // Хĕве хупрĕç кĕлете. // Аслă çынсем уçăпах // Питĕрчĕç туй кĕлетне». Михетерпе Тăхтаман кĕлечĕсем кусем. Çапла каллех «кĕлет» сăмах К. Ивановшăн, унăн поэмишĕн «самана палли» пулса тăрать. Çавăн евĕр «самана палли» шутне Нарспипе Сетнере епле пытарни çинчен каланине те кĕртмелле: «Ача чипер Сетнер те // Выртать юман тупăкра...» // «Атте-анне ирĕкĕ // Çирĕ сарă хĕр пуçне. // Выртрĕ хĕсĕк тупăка, // Ячĕ юлчĕ ял çине.

Çынна тупăкпа пытарасси чăвашра çĕнĕ тĕне куçнă хыççăн анчах пуçланнă (куна «Нарспире» çĕнĕ тĕн сарăлни курăнмасть текенсене пĕлтерме калăтпăр). Кун пек вырăнсем, тĕрлĕ пайрăм урлă вăхăта, саманана кăтартнисем «Нарспи» поэмăра тата нумай тупăнаççĕ. Вĕсем К. Ивановăн поэзири ăсталăхне, вăл хăйĕн шухăшне тĕрлĕ ăслайсемпе усă курса уçса пама тăрăшнине куç умне питĕ курăмлă кăларса тăратаççĕ.

К. Иванов хăйĕн поэминчи ĕçсем мĕнле вăхăтра, мĕнле саманара пулнине кăтартма, çапла унăн содержанине (идейине) витĕмлĕрех тума урăхларах мелсемпе те анлă усă курать. Михетер камне кăтартса, поэт вăл тарçă-тĕрçĕ тытнине сăмах майăн тенĕ пек каласа хăварать («Çичĕ тарçи-тĕрçине // Эрех

парса ӳсĕртнĕ»). Поэмăри ĕçсем чăваш çĕрĕнче капитализм малтанхи утăмсем тунă вăхăтра пулса иртнине ытларах Тăхтаман сăнарĕпе палăртать. Тăхтаман — Михетер пекех çĕрме пуян, унăн тарçă тавраш̆ĕ те чылаях-тăр, анчах вăл, «çамрăк капитализм» çынни, хура ĕçрен хăпса çитеймен, сухапуçĕ тытма именмен хытă чăваш: «Ирех хырăм тăрантса // Кайрĕ хире Тăхтаман». Тӳрĕ пилĕксен йышне кĕрсе çитеймен мĕнха Тăхтаман. Михетер те çаплах: вăл та, тарçă тытнă çĕртех, апла-капла хура ĕçе пăрахмасть: «Сиплет тулта Михетер // Туй кӳмине пĕчченех. // Ĕçлет ватă пуçĕпе, // Пурттипеле каскалать. // Савнă хĕршĕн тăрăшса, // Пичĕ тăрăх тар юхать».

Историрен паллă: Михетерсемпе Тăхтамансем чăваш тăрăхĕнче питĕ сахал пулнă, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çеç вĕсем вăй илсе хуçаланма тытăннă. Силпине Хушăлкара та вĕсем пĕрер кăна, мĕнпур халăха, мĕскĕнрех те хăравçăрах çĕр çыннине, хăратса-çаратса пурăнаççĕ. Çĕрме пуян — ялта хуçа, ыттисем ун сăмахĕнчен иртме ан хăйччăр. Çапларах пулнă та К. Иванов вăхăтĕнчи чăваш ялĕ. (Тĕслĕх — поэт çуралса ӳснĕ Слакпуç ялĕ: кунта та К. Иванов ашшĕ пуян Ваçинкка пеккисем çукпа пĕрех.)

«Нарспи» поэмăри самана сăнне Силпи халăхĕ хăйне епле тыткаланинче аван куратпăр. Ял халăхĕ ытларах хăйĕн «килти пурнăçĕпе» пурăнать. Поэт каларăш, унăн «ĕмĕр иртнĕ ĕç çинче, ĕç иртсессĕн — ĕçкĕре».

Чăвашсен паллă этнографĕ Г. Т. Тимофеев хăйĕн «Тăхăръял» ĕçĕнче,— ăна К. Иванов питĕ тимлĕ вуласа тухнă, унта каланисемпе поэма сюжетĕнче анлă усă курнă,— чăваш çынни ĕçре епле çӳренисем çинчен акă мĕнле çырса кăтартать: «Чăваш ĕçрен-мĕнтен тытăлнине те пĕлмелле мар: нимĕскер праçнике-мĕнне хисеплемесĕр... нимĕскер кунне-мĕнне астумасăр ĕçлет. Мĕнле ĕç тупать, епле лайăх вăхăт килет, çавна курса ĕçлет. Чăваш çынни ĕçленĕ çĕрте савăнать...» К. Иванов çакăнта сăнласа панă чăваш характерне ялан асра тытнă, хăйĕн поэминче çавна питĕ ăста тата витĕмлĕ ӳкерсе хăварнă. Сăмах май каласан, поэт Нарспи ята та ахальтен мар суйласа илнĕ-мĕн. Вăл ят поэма тăхăмĕпе питĕ меллĕ, кунта сăнланă чăваш хĕрĕн «çамрăк та çемçе чунне» тивĕçлĕ. Нарспи ят «нараста» сăмахран пулнă, вăл «таса чун», «çамрăк

çын» тенине пĕлтерет; перс чĕлхинче «нарс» — «ӳснĕ-ӳсмен (хĕр)», «пиçнĕ-пиçмен (çырла)». Çапла, «Нарспи» «нарс» сăмах çумне «пи» (пике) хушăнса пулнă, «çамрăк хĕр», «таса чун», «сапăр çын» тенине пĕлтерет.

«Вăхăчĕпе ĕçĕпĕр, вăхăчĕпе ĕçлĕпĕр»,— теççĕ Силпи чăвашĕсем. Вăхăта пĕлсе пурăннă чăваш çынни. Куртăмăр: вăл ăна пурнăç тыткăчи вырăнне хурса шутланă. Пушă вăхăтра ĕçесси-тăвасси унăн çĕнĕ саманара пуçланнă, эрех-сăра нихăш вăхăтринчен ытларах хуçаланнă тапхăрта йăлана кĕме тытăннă. Укçа тĕнчи çуратнă усал йăла çавă. К. Иванов çак тĕнчене кураймасть, ăна тарăхса сивлет. Чăнне калас-тăк, поэт малтанлатсах поэмăра тĕп идея мĕнле пулассине çапла каласа хурать: «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен: шывсем çинче, çĕр çинче хуçа пулса вăл тăрать. Анчах вăйлă этем те хăй тĕнчине пăхăнать. Укçапала эрехех çынна ăсран кăларать».

Эрех ăшне путнă çынсем вĕсем — «шуйттан чурисем». Çавăнпа Михетерсене хирĕç тăма, вĕсем умне тăрса çирĕп сăмах калама хăват тупаймаççĕ те вĕсем, мĕскĕн этемсем, хăравçă чунсем. Çаплах Силпи ял çынни те: «Сăмах нумай ял çинче // Çемçе чĕлхе вĕçĕнче. // Тĕрĕсси те пур-тăр çав // Ялти сăмах хушшинче. // Силпире те этемсем // Нарспи, Тăхтаман теççĕ. // Вĕсем таçтан Тăхтаман // Хаяррине пĕлеççĕ. // Михетертен шикленсе, // Вăрттăн çĕрте сăмахсем...»

Анчах пурнăç хăйĕн çулĕпех малалла шăвать. Михетерпе Тăхтамансен усал тĕнчине курайманнисем те тупăнаççĕ. Сахал-ха вĕсем, самана çине тăрă куçпа пăхакансем. Вĕсем вĕçнех çитнĕ ĕнтĕ, хăйсен этем тивĕçне сыхласа, нимĕн умĕнче хăраса-чарăнса тăрас марла вĕсем. «Савăнăç çук ку тĕнчен», «Çапла-тăр çав самани»,— çакна аванах ăнланнă кусем. Пĕтĕм халăхран уйрăм тăраççĕ Нарспипе Сетнер. Мул тĕнчи хăйĕн усаллăхне мĕн тери вăйлăрах кăтартать, çавăн чухлĕ икĕ хĕрӳ чунăн кивĕ йĕркесене хирĕç кĕрешес, çапла майпа çынсен куçне уçас хастарлăхĕ ӳссе пырать. Хура халăх, ĕççынни чунĕпе вĕсем еннеллех туртăнать, «урлă-пирлĕ калаçать», вĕçне-хĕрне тухасшăн вăл. Апла пулсан та... «чăтаççĕ-ха чăвашсем, вĕçнех çитмен-ха вĕсем». Çакăнтан тухса тăрать те Нарспипе Сетнерĕн пурнăçри асапĕ, вĕсен трагедиллĕ шăпи.

К. Иванов саманана сăпанă чухне çеç мар, чăва-

шăн «килти пурнăçне» ӳкерчĕклесе кăтартнă чухне те реализм çулĕнчен пăрăнмасть. Чăвашăн кулленхи пурнăçĕ, унăн тĕрлĕ йăли-йĕрки (туйĕ, каламĕ, вăйăйи-кулли, ташши-юрри тата ытти те) хăйĕн пĕтĕм тĕлĕнтермĕш илемĕсемпе илĕртсе тăрать, тăван халăхăн хăйне кăна тивĕçлĕ ăс-чун пуянлăхне уçса пама пулăшать.

«Нарспири» ĕçсем нумая тăсăлмаççĕ: пуш уйăхĕн вĕçĕнчен тытăнса çурла уйăхĕнче пĕтсе пыраççĕ, çур çулталăк тейĕпĕр çуракипе кĕраки хушши, ĕççийĕ. Çак хушăрах поэт чăваш пурнăçне нумай енлĕн тата тарăн сăнлама-ӳкерме питĕ лайăх ăслайсем тупать. Чăваш тĕнчи илемĕ — хĕвел хытă хĕртнĕрен шурă юртан тасалса пыракан тусемпе сăртсем, путăксемпе варсемпе çĕмĕрĕлсе кĕрлекен юханшывсем, ăшă кунсем çитнĕрен ыйхăран вăранса ешĕл тумтир тăхăнакан вăрмансем, тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен ырă шăршине сарса илемĕпе мухтанса выртакан çеçенхирсем — çаксем пурте унăн куçĕнчен каймаççĕ. Пĕтĕм тĕнче поэт чĕрине юррăн пырса кĕрет, унра савăк туйăм çуратать: «Çăтмах пекех туйăнать // Силпи чăваш ялĕнче, // Вăхăт иртни сисĕнмест // Савăнăçлă кунсенче. // Кайăк юрри, сын сасси // Ян-ян ярать таврана, // Çуркуннехи хавас юрă // Килсе кĕрет хăлхана... // Пурăнăçсем, ах, аван // Аслă Силпи ялĕнче».

Çапах та савăнăçлă кунсем сахал-мĕн чăваш ялĕнче, кунта та мул тĕнчин усаллăхĕ витĕрех курăнса тăрать. Çакă уйрăмах Нарспи шăпинче палăрать.

Нарспи... Нар пек хитре вăл, кайăк чунлă çепĕç хĕр: «Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм, // Хирти сарă чечек пек. // Икĕ куçĕ хуп-хура, // Икĕ хура шăрçа пек. // Явăнаççĕ хыçалта // Çивĕт вĕçĕ кăтрисем. //Утса-утса пынă чух // Шăнкăртатать тенкисем. // Куçĕсемпе пăхнă чух // Каччăн чĕри çĕкленет. // Çӳхе тути кулнă чух // Каччăн чунĕ çемçелет. // Хирти сарă чечеке / Ашă куçпа кам пăхмĕ? // Ун пек лайăх хитре хĕре // Мĕнле каччă юратмĕ?»

Сăнĕпе çеç мар, чунĕпе те, ĕçĕпе те илемлĕ Нарспи. «Ирех тăрать, тумланать, // Нарспи ĕçе тытăнать: // Е пурçăн çип илет те // Юрла-юрла тĕрĕ тăвать; // Е çĕлеме ларать те, // Çĕвви шăрçа пек пулать, // Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă // Пĕр кĕрет те пĕр тухать; //Е пир тĕртме ларать те // Вылянтарать ăсине; // Е хултăрчă тытать те // Çипне тиет çĕррине; //

Е сак ҫинчи кушакĕ // Питне ҫăва пуҫласан, // Апат хатĕр хăнашăн // Алли-ури ҫăмăлран...»

Нарспипе Сетнер пĕр-пĕрне чунтан юратаҫҫĕ. Ҫак юрату вĕсене кивĕ йĕркесене хирĕҫ тăма хистет. «Пĕртен-пĕрех пуҫăм пур, // Вĕри юнлă чĕрем пур, // Урхамах пек утăм пур, // Вĕсенчен те хаклăрах, // Чунăм савни, эсĕ пур. // Анчах сана та паян // Туртса илен тăшман пур, // Вăл тăшмана пĕтерме // Икĕ вăйлă аллăм пур, // Анчах, ăна пĕтерсен, // Унтан усал тĕнче пур»,— тет Сетнер.

Чăн та, усал ҫынна тĕп тума нимех те мар-тăр, анчах тĕнче усалне — укҫа тĕнчине парăннă самана тытăмне аркатма пĕчченҫĕ ҫын пултараймĕ. Нарспипе Сетнер ҫакна пĕлеҫҫĕ-и, пĕлмеҫҫĕ-и, вĕҫне ҫитнипе, Михетерпе Тăхтаманран, усал тĕнче хуҫисенчен хăйсен таса юратăвĕн тивлечĕпе хăтăлмах тăрăшаҫҫĕ.

Чăн-чăн юрату гемĕнле усала та ҫĕнтерме пултарасса шанать поэт. Уншăн ҫакă паллă: тан мар обществăра, «шуйттан чурисен» тĕнчинче, ирĕклĕ юрату пулаяс ҫук, кунта ăна укҫа вăйĕпе усă курса таптаса тăкма ялан хатĕр тăраҫҫĕ. «Юрату,— тенĕ В. И. Ленин,— таса туйăм, унра этемĕн ырă чунĕ курăнса тăрать. Вăл кăна ҫынсене телей кӳме пултарать. Анчах укҫа тĕнчинче юратăва та хĕсĕрлеҫҫĕ». Шăпах ҫакна куратпăр та эпир «Нарспи» поэмăра. Савнă ҫынĕ хăйне ҫăласса Нарспи пĕрре те шанма пăрахмасть, юлашкинчен вара, тӳсĕмĕ пĕтнипе, тамăкри пурнăҫран хăтăлса тухать. Ашшĕ-амăшĕ ăна тепĕр хут «ырă» тума пăхать. Анчах вĕсен хăратса-йăпатса каланă сăмахĕсем текех Нарспие витерейменҫĕ. Вăл халĕ пачах урăх, ирĕк пурнăҫ илемне туйса курнă ҫын ĕнтĕ, ашшĕ-амăшне тӳррине калать, пуҫĕ пĕтсен те, тепре тĕнче кулли пулма шутламасть. «Саншăн ҫав пур ырлăх // Мĕн пурĕ те укҫара...» // «Пуянлăхра анчах мар. // Ыр курасси — ҫыннинче...» — ҫилĕллĕн питлет Нарспи мула ҫеҫ шанакан, уншăн чунне пама хатĕр ашшĕне. Нарспи тĕрĕс пурнăҫшăн, этем чунĕн ирĕкĕшĕн. Вăл ашшĕне каланă сăмахсем унăн хăватне кăтартаҫҫĕ, этем укҫа тĕнчи тамăкĕнчен хăпса тухасса шантăраҫҫĕ...

Нарспипе Сетнер вилеҫҫĕ, самана чулĕ айне пулаҫҫĕ. Ҫапах та вĕсем ҫутă тĕнче хăйсене мĕн пурнине туйса-курса юлаҫҫĕ: тĕнче усаллăхне хирĕҫ тăрса,.

чĕрисенчи юрату кăварне сÿнме памаççĕ. К. Иванов, вĕсен пурнăçĕпе телейсĕр шăпине реализмла искусство хăвачĕпе тĕрĕс сăнласа кăтартса, тăван халăха çутă пуласлăха чĕннĕ, çынсен чĕринче таса ĕмĕтпе ырă туйăмсем çуратнă, вĕсен кĕрешÿри хăюлăхне çĕкленĕ. Пурнăçра укçа пуçпулса тăрасси вăрăма пымассине шаннă поэт. Çав пысăк шанăçа «Нарспи» поэмăри кашни сăмахпа, кашни сăнарпа, кашни ĕçпе чăн-чăн художник таланчĕпе тÿрре кăларма тăрăшнă.

## Поэтăн ĕмĕтри еткерĕ

Вунсакăр çулти К. Иванов М. Лермонтовăн «Иван ĕмпÿпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юррине», «Парăс», «Пирĕшти», «Хумсемпе çынсем», «Чул ту», «Тусен тăррисем», «Тĕрме çынни» сăввисене куçарнă, хăйĕн «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă» тата «Тăлăх арăм» балладипе «Нарспи» поэмине çырса пĕтернĕ. Вĕсем пурте чăн-чăн сăмах ăсти аллинчен тухнă япаласем, Октябрьти социализмлă аслă революцицченхи чăваш поэзине чап кÿрсе тăракан шедеврсем. Вĕсем К. Ивановăн генилле талантне, чăваш чĕлхин пуянлăхне, унти сăнарлăх мелĕсен хăй евĕрлĕ ăслайĕсене куçкĕрет кăларса тăратаççĕ. Чăваш поэчĕн сăвă ĕçĕнчи пултарулăхĕ шыв танĕ пек тапса тăни çинчен калаççĕ вĕсем, икĕ-виçĕ çул тăршшĕнче, 1906—1908 çулсем хушшинче, çырнăскерсем. «...Эсĕ пысăк поэт»,— тет К. В. Иванова хăйĕн пĕтĕм ĕмĕрне чăваш халăхне çутта кăларас ĕçре ирттернĕ çын, И. Я. Яковлев. Çак сăмахсем — хамăрăн чаплă поэта, унăн тăван поэзири чыслă ĕçне тĕрĕс ăнланса никамран малтан каланă сăмахсем.

К. В. Иванов чĕрине поэзи хĕлхемĕ хăçан пырса тивнине татăклă калама йывăр: унăн нумай хучĕсем çухалнă, хăшпĕрисем çунса кайнă, алçырăвĕсем çĕтĕлсе пĕтнĕ.

К. В. Иванов ачаран хитре япаласем тума ăста пулнă. Хăй валли хăй илем тĕнчи тума тăрăшнă вăл. «Кĕçтенттин çамрăк чухнех питĕ йăваш ачаччĕ,— аса илнĕ поэт амăшĕ Е. В. Николаева.— Урамра ачасемпе вылясах çÿреместчĕ. Картишĕнче ларатчĕ те тăмран ĕнесем, лашасем, сурăхсем туса ататчĕ. Ытти ачасем те пуçтарăнатчĕç ун патне, вăл вĕсене те тăм-

ран вылямалли япаласем тума вĕрентетчĕ». Кунпа пĕрлех поэт ача чухнех сăмах-юмаха та ăша илсе юлнă. Унăн асламăшĕ каласма питĕ ăста пулнă. Сывлăхлă, çирĕп карчăк мăнукĕ патне час-часах пырса çӳренĕ. «Тем те астăватчĕ, пире тем çинчен те каласа кăтартатчĕ»,— тесе çырать ун çинчен К. Ивановăн аслă йăмăкĕ М. В. Иванова. Амăшĕ те çавнах калать: «Йăвашне кура, Кĕçтенттине пурте: асламăшĕ те, кукашшĕсем те — питĕ юрататчĕç. Асламăшĕ, эпир уйрăлса тухсан, ăна пĕрехмай хăй патне илсе каятчĕ... Кукашшĕсем те ăна килмессерен хăйсем патне илсе каятчĕç. Кукамăшĕ ăна халапсем те кала-кала кăтартнă пулас. Тата кукамăшĕсемпе юнашарах Макçăм пичче текен вĕрӳçĕ пурăнатчĕ. Ӳссе çитсен, Чĕмпĕрте вĕренме тытăнсан, Кĕçтенттин çавăн патне çӳресе хăйне кирлĕ тĕрлĕ япаласем çыра-çыра илетчĕ».

Çапла, К. Иванов пĕчĕкренех асамлă пурнăçа туртăннă, пулни-иртни çинчен ваттисем каласа кăтартни, халапсем ярса тĕлĕнтерни унăн ăсне-пуçне хăвăрт аталанма пулăшнă, чĕринче ăшă та ырă туйăмсем çуратнă. Ӳсерехпе вăл хăйĕнче те асамçă хăвачĕ пуррине сисме тытăннă. Çакăнтан пуçланнă та унăн илемлĕ çырулăхри патвар ĕçĕ. Асламăшĕпе кукамăшĕ каласа панисене асра тытсах пулĕ К. В. Иванов тăван ăру пурнăçĕпе çыхăннă произведенисем çырма шутланă, çав вăхăтрах ăна халăх юмахĕсенчи сăнарсем те хытă пăлхатса тăнă.

Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай К. Ивановăн алçырăвĕсене тĕпченĕ май çапла çырать: «Константин Иванов çав çулхине (1906 çул.— Н. И.) Слакпуç епле пуçланса кайни, асланшĕ енчи йăх та, асламăш енчи йăх та епле тымарланса пыни çинчен Пушкинăн «Арап Петра Великого», Аксаковăн «Семейная хроника» произведенийĕсем пек кĕнеке çырма ĕмĕт тытнă...» Çакă чăнах та тĕрĕс иккенне чылай япалара курма пулать. Вата çынсем астуса каласа пана тăрăх, Слакпуç ялĕнче темле кивĕ хутсем, кунти халăха çĕр касса пани çинчен çырнăскерсем, упраннă. К. Иванов, çавсемпе паллашса, хăйсен йăхĕ-тĕпĕ епле аталанса пынине тĕпчесе пĕлме тăрăшнă. Вăл унăн тĕп тымарне шыранă. Ивановсен йăхне пуçарса яраканĕ Кашкăр ятлă çын пулнă. Вăл Пушкăрт çĕрне Атăл тăрăхĕнчен XVIII ĕмĕрсенчех тĕне кĕмен ытти чăвашсемпе пĕрле куçса пынă, вĕсемпе пĕрле 1757 çул-

та Пелепей хулине тума пуçланă. 1781 çулта хăйсене унтан хăваласа кăларнă хыççăн Слак шывĕ хĕрне килсе вырнаçнă. Слакпуç ялĕнчи Пăртта несĕлне йышлантарма тытăннă. К. Иванов кун пирки ака мĕн калать: «Манăн тӳрĕ асаттесем çаксем: Кашкăртан Кашкăр Иванĕ (кунăн арăмне Пăртта тенĕ те.—Н. И.), Кашкăр Иванĕнчен — Симун, Симунтан Микулай писĕр, Микулай писĕртен Ваçинкка пуян, Ваçинккаран — эпĕ, Кĕçтук». Пăрттан пĕтĕм ратне вăл çапларах ӳкерсе хунă:

П ă р т т а

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | I | | |
| Ванюшке | Çтаппан | Симун | Нĕрчче | Хветут |
| I | I | I | I | I |
| Никандр | Кавĕрле | Микулай | Якунне | Тимка |
| | I | I | | I |
| | Кĕркури | Ваçинкка | | Клавди |
| | | I | | |
| | | К ĕ ç т у к | | |

Пăртта упăшкин, Кашкăр Иванĕн, ватлăхĕ ăнăçлă пулман-мĕн: Ванюшке ятлă ывăлĕ таркăна тухнă пирки ашшĕн салтака кайма тивнĕ, вăл вара унтан каялла гаврăнайман. Ытларах асламăшĕ каласа панă тăрăх пулас, К. Иванов хăйĕн тĕпри несĕлĕсене питĕ тĕплĕ çырса кăтартать, вĕсем мĕнлерех кăмăллă пулнине уçса парать. «Пирĕн ратне ашшĕ Кашкăр пулнă. Вăл тĕне кĕмен чăваш. Унăн икĕ ывăл юлни паллă: пĕри Иванĕ, тепри Кашкăр Куçми. Иванин йăхĕнчен юлнисене «Пăртта ачипчи» теççĕ, Куçминне — «Куçма ачипчи».

Кашкăр хăй ăçтан килнине те пит аванах пĕлекен çук. Ваттисем Пелепейрен, вырăссем килсе тулсан, саланнă теççĕ. Ĕлĕк пирĕн ял вырăнĕнче вăрман анчах пулнă, унта кашкăрсем пит нумай çӳренĕ. Пирĕн асатте те хамăр ял тĕлти вăрмана килсе ларнă та кашкăр тытса пурăннă. Çавăнпа ăна Кашкăр тенĕ, теççĕ.

Кашкăр хăй мĕнле вилни те паллă мар. Ун ывăлĕ Куçминчен юлнă йăх. Пăрттасем пекех нумай, усал, çмил мар. Мĕншĕн вăл апла? Кашкăр Иванĕн арăмĕ Пăртта пулнă. Пăртта пек хастар арăм ялта пулман. Пĕтĕм яла вăл хăй аллинче тытнă. Пурте ун умĕнче

чётресе тăнă. Хуть кама та кастарас тесен кастарнă, кастармасан илсе кёрсе ĕçтерет-çитерет те кăларать те ярать...

Çапла пулнă пирĕн Пăртта асанне. Халь те пулсан Пăртта ачи-пăчисем вăййа тухсан парăн-парăн сикнĕ чух: «Пăртта патне пăртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе»,— тесе такмакласа сикеççĕ».

Çаксене, Пăртта йăхĕ çинчен кĕскен каласа çырнисене, К. Ивановăн хăйсен несĕлĕ çинчен çырма палăртса хунă кĕнекен пуçламăш сыпăкĕсем вырăнне хума пулать, мĕншĕн тесен вĕсем пурте унăн хучĕсем хушшинчи тĕрлĕ плансемпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Акă, сăмахран, вăл хăйĕн пĕчĕк тетрадĕнче, кĕсъере чиксе çӳреме тунинче, çапла çырса хуни тупăнать:

«Тетрадь № 1.

1. Умĕнхи сăмах.

I.

2. Михетер.
3. Кĕçтентин.
4. *

II.

5. Кашкăр.
6. Иван.
7. Пăртта-карчăк.
8. Пăртта ачипчисем».

Тепĕр çĕрте К. Иванов «Умĕнхи сăмахра» мĕн каласшăне тата кĕнекере епле саманана сăнлассине те çырса хăварнă. Ун шучĕпе, умĕнхи сăмах çак ыйтусене уçса памалла пулнă:

«1. Мĕн пĕлес килет кашни çыннăн?
2. Мĕншĕн пурте пĕлеймеççĕ?
3. Епле эпĕ çак кĕнекене çыртăм?»

«Пăртта-карчăк» пайра кĕнекен тĕп шухăшне уçса памалла пулнă-тăр, ăна К. Иванов çапларах планпа çырма пăхнă:

«1. Пелепей хули (çĕр вăтăр çул ĕлĕк).
2. Карчăк. Пурăнăç.
3. Пăкача. Пуп.

* Çакăнта К. Иванов асламăшĕ ĕнчи йăха кăтартма шутланă пулмалла.

4. Слак çинче. Вăрăм Ухтерен.
5. Вырăссем. Ванюшке.
6. Ёпхӳре мĕн пулни, мĕн курни.
7. Килте. Пурăнăç.
8. Халь.

Тетрадей (3 л.) 8».

Çак тетрадьсенче мĕн калассине К. Иванов кĕскен çырса хунисенче куртăмăр ĕнтĕ. Вăл шутланă тăрăх, унăн кĕнекинче Пăртта чăваш йăхĕ пĕр ĕмĕр тăршшĕ ытла сăнланмалла пулнă. Вырăс халăх историнчи нумай паллă ĕçсене чăваш халăх пурнăçĕпе çыхăнтарса кăтартма шутланă-мĕн вăл. Пелепей хули,— каларăмăр, ăна чăвашсем XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çур пайĕ вĕçнелле тума тытăннă,— Ёпхӳри ĕçсем, кунти вырăссемпе чăваш çыннисем тăванлă-туслă хутшăнса пурăнни, Пăкача пăлхавĕ, тĕн пусмăрĕ, ял пурнăçĕпе йăли-йĕрки, поэт пурăннă вăхăт — çаксем пурте К. Ивановăн ĕмĕтри кĕнекинче паллă вырăн йышăнса тăнă. Çапла, К. Иванов историлле-социалла роман е повесть çырас шухăшпа пурăнни куçкĕрет. Кун пирки Я. Ухсай питĕ тĕрĕс калать. «Çĕр çул ĕлĕк» тенинчен,— тет вăл,— Ивановăн пĕтĕм шухăшĕ пуçланса каять. 1775 çул Емельян Пугачев (поэт хăй кĕнекин планĕсене 1906—1907 çулсенче тунă, çав вăхăталла шăпах XVIII ĕмĕрти хресчен вăрçи пулнăранпа çĕр вăтăр çулсем çитсе пынă.—Н. И.) хăйĕн хăюллă çыннисемпе Пушкăрт çĕрне пырса кĕнĕ, унта асап куракан пĕтĕм халăха — вырăссене, пушкăртсене, тутарсене, чăвашсене тата ыттисене те патшапа тĕрлĕ харам пырсене хирĕç тăратнă. Константин Иванов аллинче архив материалĕсем те, Пелепейри ĕçсем çинчен тĕпчесе каласа паракан кĕнекесем те пулман, вăл ăруран ăрăва куçса пыракан сăмахсене итленĕ, вĕсене çырса пынă. «Пăкача. Пуп» ят парса, вăл ятарласа пĕр сыпăк çырма шутланă. Чăвашсем çĕнĕ çĕре куçса килнĕ чухне вĕсене миссионерсем йĕрленĕ, Христос тĕнĕпе пĕрле вĕсем чăтма çук пысăк пусмăр илсе çитернĕ, тĕне кĕменнисене темле майпа та хырçă-марçă тӳлеттернĕ. Сăмахран, ун пеккисене тĕне кĕнисемпе пĕрле пĕр çăлтан шыв та ăстарман. Пелепейри чăвашсем вĕçĕ тулса çитнипе йывăç чиркĕве çунтарса янă, пупсем ун вырăнне кирпĕчрен çĕнĕ чиркӳ ларттарнă. Пăлханакансем вара ăна вут тĕртме

пултарайман, турăшĕсене пурпĕр çырмана кайса ывăтнă. Çак ĕçсем «Пăкача саманинче» пулса иртнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Константин Иванов 1906 çулта Емельян Пугачева аса илнĕ, хресченсем патшапа унăн тӳри-шарине хирĕç çĕкленнине вăл хавхаланса мухтанă». Чăн та, К. Иванов «Пăкача самани» çинчен, вăл чăваш хушшинче пулса кĕрешӳ вутне хыптарса çӳрени çинчен ялан шухăшланă. Çакна вăл «Тĕрĕçĕ хĕр» ӳкерчĕк çине «Пугачев» тата «Воспитанник Константин Васильевич Пугачев» тесе эрешлесе çырнинче куратпăр. К. Иванова çамрăк чухне çывăх пĕлнĕ тата унпа пĕрле Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Г. И. Ильин каласа панисем те çавнах кăтартаççĕ. «Çывăрас умĕн эпир, икĕ класри ачасем,час-часах пĕр-пĕринпе пуçтарăнса калаçнă,— аса илнĕ вăл.— Авал Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ вырăнĕнче Степан Разин патша çарĕпе çапăçни çинчен тата ытти тĕрлĕ историллĕ хыпарсем çинчен эпĕ чи малтан хамăрăн общежитинчи калаçусенче илтнĕ. Пĕрре К. В. Иванов пире Пугачев çинчен каласа панĕ. Пугачев, хăйĕн пăлхавĕ вăхăтĕнче Пушкăрт çĕрне пырса кĕрсен, К. В. Ивановăн аслашшĕсем патĕнче пулса хăналаннă имĕш».

К. Иванов çырма шутланă кĕнеке,— ăна «Пăртта йăхĕ» тейĕпĕр,— темиçе пайран тăмалла пулнă. «Пăртта карчăк» хыççăн унăн тетрадĕнче тата тепĕр икĕ пайĕн ячĕсем паларса юлнă:

«в. Чун татăкĕ.

1. Чун татăкĕ.
2. Амăшĕ.
3. Ашшĕ.
4. Паянхи кун.
5. Хура пĕлĕт, хĕрлĕ вут.
7. Кайран.

Тетрадей (3) 1».

с. Хрулка сухалĕ.

Тетрадей (3) 1».

Питĕ шел, К. В. Иванов хăйĕн «Пăртта йăхĕ» кĕнекине çырса хăварайман, мĕн тери хăватлă япала пулма пултарнă вăл. Чăвашăн ĕлĕкхине хальхи пурнăçне К. Иванов куçĕпе курнă пулăттăмăр. Тен, унта поэт хăйĕн «Хальхи самана» сăввинчи шухăшсенех каланă пулĕччĕ. Çав сăвăра, 1905—1907-мĕш çулсенчи вырăс халăх революцийĕ хыççăн çырнăскер-

те, К. Иванов чăвашăн историри пурнăçĕ çине мĕнле пăхни питĕ лайăх палăрса тăрать. «Ĕлĕкхипе хальхине», хăйĕн вăхăтне танлаштарса, вăл тăван халăх пурнăçĕ вĕçĕм йывăрланса пынине, çав вăхăтрах чăвашсем И. Я. Яковлев тăрăшнипе çутталла туртăннине, хăйсен культурине ӳстерсе пынине, çавна май хăйĕн этем тивĕçĕ çинчен ытларах та ытларах шухăшлама тытăннине уççăн курать.

Чăваш аваллăхĕ поэт умне пĕтĕм ырри-усалĕпе тухса тăрать, хальхи çинчен, пуласси çинчен ăна канăçсăррăн шухăшлаттарать.

Сăмах май калас-тăк, «Пăртта йăхĕнчи» «Чун татăкĕ» пайра «Паянхи кун. Хура пĕлĕт, хĕрлĕ вут» тенĕ вырăн та шухăша ярать.

К. Иванов наци пĕрлĕхĕшĕн тăрать, тăван халăх интересĕсене сутакан путсĕрсене çилĕллĕн питлет: «Анчах чăваш хушшинче // Чунĕ хытнă çынсем те // Тапаланма пуçларĕç, // Тăрса çапла каларĕç: // «Чаплă вырăн тупасчĕ, // Часрах улпут пуласчĕ». // Тĕрлĕ çутă тӳмешĕн // Тĕнки тухать, ав, лешĕн; // Чăвашла та калаçмасть, // Тăванне те астумасть: // Чĕре шăнса кайнă çав, // Чĕрĕ виле пулнă çав». Кун пек çынсем К. Ивановшăн чăваш ӳчĕ çинчи ӳпне çăпан, тăван халăх пурнăçĕнчи мĕнпур усалпа, мĕнпур асаппа пĕр ретре тăракан социалла пулăм.

К. Ивановăн ĕмĕтри еткерĕ, унăн çырма шутланă е çырса пĕтереймен произведенийĕсем çинчен калаçнă чух вăл епле тискер те усал вăхăтра пурăннине, çавăнпа поэт калас тенине пур чухне тӳррĕн те çăмăллăн халăх умне кăларма пултарайманнине манма юрамасть. Унăн та, В. И. Ленин каланă пек, «эзоп чĕлхипе» усă курма тивнĕ. Паллă, К. Иванов «Пăртта йăхĕ» кĕнекере истори чăнлăхне ч ă н-ч ă н ĕçсемпе ч ă н-ч ă н сăнарсем урлă кăтартасшăн пулнă. Çав ĕçе тума вăл хăйне хатĕрлесе те çитернĕ-мĕн. Çакна мар-тăк — мĕне пĕлтереççĕ-ха вăл час та час ялă пырса çӳренисем, вырăс историне, вырăс литературине тимлĕ тĕпчесе пĕлме тăрăшнисем, М. Лермонтовăн «Юрă» йышши сăввисене çине тăрсах чăвашла куçарнисем? Кунсăр пуçне, К. Иванов хăйĕн вăхăчĕ çинчен темиçе пьеса çырма хатĕрленни паллă. Поэт вилнĕ хыççăн унăн хучĕсем хушшинче çакăн евĕр кĕскен çырнисем те чылай тупăннă:

«На 1906—07 уч. год.

1. Эрех, комедия в одном действии (в стихах). 600.

2. Йывăр çул, трагедия в двух действиях (в стихах).

3. Ялти ĕçсем, случаи из деревенской жизни.

4. Йăвăр çул, семейные события 1906 г.

5. Икĕ ăру, родословные записи».

Е тата:

«1. Эрех, в одном действии. 12 страниц.

2. Тăлăх ача, в двух действиях. К 1 декабря».

К. Иванов питĕ çамрăклах пурнăçа хытă сăнанă, ăна çырса кăтартма тĕрлĕ форма шыранă. Поэта драма тĕсĕсем — трагеди, комеди тата драма (тĕп тĕсĕ), вĕсен пĕчĕк формисем ытларах килĕшнĕ-мĕн. Çырса ĕлкĕреймен пулас вăл вĕсене.

Я. Ухсай каланă тăрăх, К. Иванов 1907 çулта юмахсен ярăмне çакăн пек планпа çырма шутланă: «1. Тимĕр тылă. 2. Тăлăх арăм. 3. Хуркайăксем. 4. Икĕ хĕр». Кайран «Хуркайăксем» тенине хуратнă, тепĕр çĕрте «Чăваш патши çинчен хунă юрă» («Легенда про чувашского царя») пуçламăшне çырса хăварнă. Çакă, тен, М. Лермонтовăн «Юрри» майлăрах япала пулма йултарнă. Унти «Ватă вăрман шухăшĕ» татăкра поэт çыннăн йывăр самантри кăмăлне питĕ ăста уçса панă: «Асап килсен, хĕн килсен, // Шухăшласа ларатăп: // Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт, // Ăçта кайса çухалтăн? // Çамрăк кунсем, ыр кунсем // Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.// Асап, хĕн-хур халĕ пур, // Килчĕç хура пĕлĕт пек».

Паллах, кунта К. Иванов хăйĕн асапĕ, хăйĕн хĕнĕ çинчен калать; тен, вăл, «Чăваш патши çинчен хунă юрăпа» М. Лермонтов пекех, хăйĕн вăхăтĕнчи саманана, унти пусмăрпа тискерлĕхе «эзоп чĕлхипе» каласа пама шут тытнă. Çапла калама сăлтавĕ те тупăнать. Акă, илер-ха унăн «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» тата «Икĕ хĕр» балладисене е тата «Шуйттан чури» трагедин планĕпе унăн малтанхи пайĕнчи сыпăка. Вĕсене тимлĕ тишкерсен тата К. Иванов чăваш пурнăçĕ çинчен пысăк калăплă кĕнеке çырма ĕмĕтленнине шута илсен, çакă тухса тăрать: çӳлте асăннă мĕнпур япаласем «Пăртта йăхĕ» кĕнекене кĕмелле пулнă, тен. Вĕсенчи ĕçсем çинчен тӳрĕнех каласа кăтартма май çукрах-тăр, çав япаласене К. Иванов юмах-халап формипе хывнă. (Кунта çакă та аса килет: К. Иванов «Нарспи» поэмине те халап ятпа

кăна кăларма пултарнă.) Вăл ытахальтен марах «Шуйттан чури» пирки: «Халăх халапне улăштарса çырнă виçĕ пайлă трагеди» («Трагедия в трех действиях. Переделка из народного рассказа»),— тесе хăварнă.

М. Я. Сироткин питĕ тĕрĕс калать. «К. Ивановăн,— тет вăл,— чылай произведенийĕсене пĕрремĕш революцие путарнă хыççăн алхасса кайнă реакци тапхăрĕнче çырма тивнĕ. Çавна пула хăй вăхăтĕнче халăха канăç паман ыйтусем çинчен тÿррĕн калама пур чухне те май килмен. Хăйĕн шухăшĕсене унăн час-часах ытарлăн, юптаруллăн, халăх сăмахлăхĕнчи майлă калама тивнĕ...

Юмах-халап формипе усă курни К. Иванова халăхăн кулленхи пурнăçĕнче пулса иртекен ĕçсем çинчен калама кансĕрлемен. Унтан та ытларах, çакă ăна хăйĕн прозведенийĕсене халăха çывăхрах, ăнланмалларах, унăн кăмăлне килĕшÿллĕрех тума май панă». Укçа тĕнчин пусмăрĕ, çав тĕнчен нишлĕхĕ, «шуйттан чурине» сутăннă çынсен сăнсăрлăхĕ, унăн тыткăнне лекнĕ саманан этемсĕрлĕхĕ, пĕтĕмлетсе каласан, кирек мĕне те мулпа виçсе хаклакан обществăри «тĕрлĕ хуйхă-суйхă», «тĕрлĕ усал-тĕсел», «тĕрлĕ чир», «тĕрлĕ хĕн-хур» — çаксем пурте халăха канăç паман та ĕнтĕ. К. Ивановăн, хăй вăхăтĕнчех палăрнă поэтăн, çав ыйтусене хускатмаллах, ăнлантармаллах пулнă. Ку тĕлĕшпе вăл ун чухнехи вăхăта юрăхлă мел тупнă — «эзоп чĕлхи». «Икĕ хĕр», «Тăлăх арăм»— çав чĕлхепе çырнă произведенисем. «Шуйттан чури» трагедин чĕлхи унтан та хăватлăрах. Çавăнпа ун пирки чылайрах калама тивет. Нумайăшĕ пирĕн ăна ăнлансах каймаççĕ, трагедире **мĕнле** шухăш тата çав шухăша **мĕнле** майпа йĕркелесе пынине сиссех илеймеççĕ. Хăшĕсем ку произведение романтизм картине кĕртеççĕ, пурнăçран, К. Иванов вăхăтĕнчен, пачах уйăрса яраççĕ. Теприсем çак реализмла хăватлă произведение юмах шайне антарса лартаççĕ. «Шуйттан» тата «Пирĕшти» — çаксем пăтраштараççĕ мĕн вĕсене. Искусствăна ансат пăхса хаклама хăнăхнăран-тăр, унта тĕрлĕ ăслайсене, сăнарлăх мелĕсен тĕрлĕ тĕсĕсене курасшăн мар вĕсем. Н. Гоголь повеçĕсене, Щедрин юмахĕсене, Пушкин халапĕсене, Горький калавĕсене, Маяковский сăввисене пĕле тăркачах, унашкал тĕпчевçĕсем К. Иванов трагедин хăйевĕрлĕх-

не курмасăр иртеççĕ, поэт пултарулăхĕнче, апла пулсан, пĕтĕм чăваш поэзинче çак произведенин пысăк пĕлтерĕшне чакарса кăтартаççĕ. Эпир К. Ивановăн «Шуйттан чури» трагедине Гетен «Фауст» трагедийĕпе танлаштарма май пуррине куратпăр. (Кунта çакна каламалла: «Нарспи» авторĕ Гете пурнăçĕпе пултарулăхне аванах пĕлнĕ-мĕн. Вăл тĕнчипе паллă нимĕç поэчĕн «Рейнеке-Лис» сатирине ача чухнех чăвашла куçарнине асăнаççĕ.)

«Фауст» — Гетен чи паллă трагедийĕ. Вăл ăна ĕмĕрĕ тăршшĕпе тенĕ пек çырнă. Унăн тĕп содержанийĕ — çын пурнăçĕн философине уçса парасси, урăхларах каласан, этем çĕр çинче мĕншĕн пурăннине, вăл çутă тĕнчере никамран вăйлине тата чыслине кăтартса парасси. Вырăс генийĕ Л. Толстой ун çинчен питĕ лайăх каласа хăварнă. 1865 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче вăл хăйĕн дневникĕнче кĕскен çапла çырса хунă: «Гетен Ф а у с т н е вуларăм. Асчах поэзийĕ, искусствăсăр пуçне урăх нимĕнпе те сăнласа кăтартма май çук япалана ўкерчĕклекен поэзи вăл». Искусствăсăр пуçне урăх нимĕнпе те сăнласа кăтартма май çук япала вырăнне вырăссен чаплă писателĕ мĕне хуни паллă: халăх пурнăçĕ, этем пурнăçĕ, унăн нумай тĕрлĕ йăли-йĕрки, унăн шухăш-кăмăл туртăмĕ. Çакна тата Гете трагедийĕн тарăн философине, унăн шухăш пуянлăхне темрен мала хурса хакланă та Л. Толстой.

Форми енчен те «Фауст» хăйне евĕрлĕ, хăйне сăпатлă. Гете, пурнăçри тĕрлĕ пулăмсене кăтартас, вĕсене нумай енчен курса хаклас тесе, трагедири тĕп сăнара, Фауста, Мефистофельпе, «шуйттан çынпа», тытăçтарать, çавăн пекех ытти нумай-нумай ытарлă сăнарсемпе — Турă, Пирĕшти, Таса çын, Тухатмăш карчăк, Тасапа Усал сывлăш, Ырăпа Пике хĕр, Паттăр йышши сăнарсемпе анлă усă курать. Çавсем пурте ăна Фаустăн чунри кĕрешĕвне, унăн этем ирĕклĕхĕпе тивĕçлĕхĕшĕн çунса тăракан пурнăçне пĕр пĕтĕм сăнар пек кăтартма кирлĕ пулнă. А. Пушкин Гетен çак ăсталăхне питĕ ырланă. «Борис Годунов» трагедине çырнă чухне вăл хăй те трагедин çĕнĕ формине шыранă, çав форма драма шухăшне лайăхрах та туллирех уçса памалла пулнă ĕнтĕ. Поэзи ĕçĕнчи хăюлăх çинчен шутласа, литература произведенийĕсене уйрăм çĕнĕ сăмахсем кĕртнипех хăйсене хăюллă çынсем вырăнне хуракансене А. Пушкин йышăнасшăн

пулман, хăюллăрах хăюлăх шыранă вырăс поэчĕ. «Хăюлăхăн пысăк тĕслĕхĕ пур,— тенĕ вăл, çавă — шырав, çĕнĕлĕх, унта анлă план творчествăллă шухăшпа тачă çыхăнса каять. Шăпах çавăн пек хăюлăх Шекспирăн, Дантен, Мильтонăн, «Фаустри» Гетен, «Тартюфри» Мольерăн пур». В. Белинский Гетен «Фаустне» Байронăн «Манфречĕпе» тан лартать. Шиллерăн «Орлеан хĕрĕпе» «Турă пики» драмисене танлаштарса тата вĕсем «пысăк ĕçсемпе пысăк ĕмётсене, ырă кăмăла сăвă чапĕпе мухтаççĕ» тесе, «Манфредпа» «Фаустăн» хăйевĕрлĕхĕ урăххинче пулнине палăртать. Çав урăххи вăл — «Этем чунĕ шалтан таткаланма тытăннине çав этемех тулли пурнăç енне туртăнни урлă кăтартни. Çавăн йышши драмăн паллă енĕ — пурнăç тĕрĕслĕхне ниме хуманни. «Лирикăллă драма (В. Белинский шучĕпе, «Манфредпа» «Фауст» шăпах çавăн йышшисем. —Н. И.) чăн-чăн пурнăçран пăрăнарах тăма («презирать может условиями внешней действительности»), сцена çине ырăсем кăларма тата чĕрĕ çынсен сăнарĕсемпе сăнĕсем вырăнне ĕмĕт, туртăм, шухăш кăларса тăратма пултарать («давать образы и лица страстям, желаниям и думам»), урăхла каласан, темĕн тĕрлĕ ытарлăхпа тата паллăпа (символпа) усă курма тăрăшать.

К. Ивановăн «Шуйттан чури» трагединче çав япаласем çук-и вара? Паллах, пур. Ăна нимĕн хăрамасăр тата иккĕленмесĕр «Фауст» евĕр-лирикăллă драмăсен шутне кĕртме пулать. Анчах унăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем те тупăнаççĕ. Вăл, тĕрĕсне калас-тăк, чăн-чăн драма-трагедиех мар тăр-ха. Унта, çынсене ĕçре (действире) кăтартнисĕр пуçне, поэт хăйĕнчен каланисем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ку — К. Иванов трагединчи пĕр уйрăмлăх, вăл чăнах та лирикăллă произведени пулнине кăтартакан паллă. Анчах унăн трагедийĕн тĕп палли, ăна тепĕр трагедисенчен, вăйлă çынсемпе вăйлă туйăмсене сăнлакан трагедисенчен уйрăмрах тăваканни вăл — тĕнче усалне, «шуйттан чурине» тухнă, чунне укçана парăнтарнă мĕскĕн çынсен пĕрсĕрлĕхне кăтартнипе кăмăла пăлхатни, айван та хăватсăр çынсен тискер элчелĕпе (шăпипе) пурнăçри тĕрĕсмарлăха халăх умне кăларса тăратни. Н. Чернышевский çын пурнăçĕнчи усала трагеди тенĕ. Усаллăхпа тĕрĕсмарлăх — акă мĕн çын пурнăçне трагедиллĕ тăвать, акă мĕн ăна вилĕм умне пырса

тăратать. «Трагическое,— тет Н. Чернышевский,— есть страдание или погибель человека — этого совершенно достаточно, чтобы взволновать, поразить нас ужасом и состраданием, хотя бы в этом страдании, в этой погибели и не проявляется никакая «бесконечно могущественная и неотразимая сила». Случай или необходимость, причина страдания и погибели — все равно, страдание и погибель ужасны».

Халĕ каланисем К. Ивановăн «Шуйттан чури» трагедине пĕтĕмпе тивĕçлĕ. Вăл ăна вĕçне çитиех çырса хăварайман-тăр. Темрен килнĕ çавă. Пĕрисем калапă пек, «Нарспи» поэмăна пуçăнни, художник ĕçне пысăкарах хума тытăнни тата темтепĕр ăна трагедие çырса пĕтерме чăрмантарнă. Анчах трагедин планне поэт питĕ тĕплĕ шухăшласа тунă, мĕнпур паллă ĕçсене упта палăртса хунă. Акă вăл:

«Действие первое

Çеçенхир. Юман. Ун кутĕнчех пысăк чул выртать. Вăрçă кĕрлесе иртсе каять. Аманнă чăваш. Икĕ юлташ. Укçа енчĕкĕ. Шуйттан: «Ил, ил укçине», «Сывă пул»,— аманнине вĕлерет. Савăнăç юрри. Ăн килсе кĕрет. Сăмсине çапса çĕмĕрет. Ассăр юрă. «Ӳкĕн!» тенĕ сасă. Ансăр пулать. Çил тухать. Аçа çапать. Шуйттанпа пирĕшти.

Действие второе

Пирĕштисем шăтăк тавра. Усал çынна ылханаççĕ. Вăрçăра вилнисене пиллесе юрлаççĕ. Унтан вĕсен чунĕсене илеççĕ те каяççĕ. Пĕччен çын. Шуйттан юрри, ахăлтатни. Асатмалли юрă. Тăпра яра пуçлаççĕ. Аçа çапать, шуйттан ахăлтатать. Çынсем тарса пĕтеççĕ. Пирĕштисем анса шăтăка тултарма тытăнаççĕ.

Действие третье

Килте. Пĕр çул иртсен.

Пӳртре. Амăшепе ачи. Амăшĕн хуйхăллă юрри. Ашшĕн хуйхăллă сасси килсе кĕрет. Пурте хăраççĕ. Шуйттан! Шуйттан! Мăйракаллă! Мăйракаллă! Амăшне те, ачине те вĕлерет. Çӳлте аслати кĕрлет. Пирĕшти чӳрече витĕр: «Мĕскĕн этем». Пирĕшти юрри. Ку кĕтесре хĕсĕнсе ларнă. Пирĕшти. Тепĕр ачи килсе кĕрет. Шуйттан! Кăна та вĕлерет. Аçа çапать, чӳречерен шуйттан кулса ярать те кунăн чунне илсе каять.

К. Иванов «Шуйттан чури» трагедине эпиграфпа пуçлать. Вăл трагедин тĕп шухăшне ăнлантарать те:

Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ.

Усала паrăннă çын, пурнăçри тĕрĕс йĕркене пă-

сакан усал чун ниçта та ырлăх тупаймĕ, вăл пĕлĕтри çăтмаха та кĕреймĕ, çĕр çинче те ķанăç кураймĕ — çак шухăш кунта. Вĕçĕ пĕрре — вилĕм. Усал вилĕм. Анчах усаллăхăн вĕçĕ курăнмасть. Çакăнтан тухса тăрать трагедиллĕ пурнăç. Тĕнче улшăнмасăр вăл чарăнасси те палăрмасть. Ķ. Иванов трагединче çапла. Пурнăç усалĕ çын чунĕнчи ырăпа усала—Шуйттанпа Пирĕштие тытăçтарать. Чунри усаллăх, Шуйттан, халĕ вăйлă, унри ыррăн та, Пирĕштин, хăвачĕ пур-ха, анчах унăн тахĕ усала çĕнтерме çителĕксĕр. Шуйттан çынна усал ĕçе хĕтĕртсех тăрать, Пирĕштие пĕрре те пăхăнасшăн мар вăл. Çапах Шуйттан Пирĕштие пĕтерсех çитерейместь, унăн хăйĕн кунтан, çутă тĕнчерен, çын пурнăçĕнчен хăпма тивет. Çапах та вăл, Пирĕшти темĕн тери хирĕç тăрсан та, хăйĕн çĕр çинчи усал ĕçне туса çитеретех.

Ķ. Иванов трагедийĕн малтанхи действийĕнчи сыпăкĕнченех çакна аван куратпăр. Шуйттан, чунри усал, хĕтĕртнипе пиччĕшĕ шăллĕне сăнăпа чиксе вĕлерет, унăн укçине пĕтĕмпе хăйне илет. Унччен вĕсем иккĕшĕ пĕр каварлах пулнă курăнать-ха, укçине уйрăмшарăн пухса пынă. Укçи хушăнса пынăçемĕн пиччĕшĕ усаллансах каять, шăллĕн укçине те хапсăнма тытăнать. Шăллĕ те «турă парнинчен» чĕрĕ чух уйрăласшăнах мар.

«Вилсен вилĕп, чĕрĕлле
Памăп турă парнине»,—

тесе хăюланать. Анчах вăл йывăр сусăрланнă, пиччĕшне хирĕç тăма унăн вăйĕ çителĕксĕр. Икĕ аллинчи икĕ çĕçĕ те ăна çăлаймасть. Хутаç тулли çап-çутă ылтăн-кĕмĕле курса тата чунĕнчи Шуйттан çине-çинех хĕтĕртсе тăнине пула, пиччĕшĕ урсах каять:

Вĕлеретĕп! Парсан пар! —

çиллĕн кăшкăрать вăл, «ухмах çыннăн куçĕсем йăлтăр-йăлтăр çунаççĕ, хутаç патне пăхнă та, хутаç патне туртăнать». Анчах шăллĕ: «Вĕлер, чуну çитейсен»,— тени çеç ăна самантлăха чарса тăрать. Чунри Шуйттанĕ çаплах хĕтĕртет, усал ĕçе вĕçлеме хистет. Çын, ырра манса, усала парăнать: укçа ун чунне илет. Вăл «савăнăç юрри» пуçлать, ăнран тухса кайсах такмакласа ташша ярать. Çакăнта унăн усал чунĕ, нишлĕ ĕмĕчĕ уйрăмах лайăх тухса тăрать: «Мана мĕн пит кирлĕччĕ? // Укçа, укçа — акă вăл! // Укçа пулсан, мул та пур, // Унтан урăх мĕн кирлĕ? // Ылтăн-кĕмĕл

манăн вăл. // Ялти пуян эпĕ вăл! // Кайăп киле ыранах, // Çитĕп киле каçченех, // Ылтăн-кĕмĕл çурт лартăп, // Выльăх тытăп пинĕпе. // Ирттерĕп çав пурнăçа // Савăнса çеç, кулса çеç. // Текех канăçсăр çынсем // Вăрçăсенче çÿреччĕр. // Мана тата мĕн çитмен? // Манăн акă пурте пур. // Ылтăн-кĕмĕл манăн вăл, // Ялти пуян эпĕ вăл, // Укçа пулсан, мул та пур, // Унтан урăх мĕн кирлĕ?»

Çав вăхăтрах çын кăштах тăна кĕрет: унра самантлăха ырă çуралать. Çынна упран Пирĕшти вăл. Вăл çынна шеллет, тăна кĕме тилмĕрет: «Мĕскĕн этем, мĕн турăн? // Куçна уçса пăх, мĕскĕн, // Ухмах ĕçÿ çинелле». Çакна илтсе, пиччĕшĕ лăштăрах каять, тăнĕ тухса кайнипе тăпра çине йăванать: хăйĕн тискер ĕçне самантлăха ăнланнăран ĕнтĕ унпа çапла пулса тухать. Апла пулсан та, чунри Шуйттанĕ ахăрма пăрахмасть, вăл çынна хăйĕн чуринчех тытасшăн. Шăллĕ те вилеймен мĕн-ха, вăл, тăна кĕрсе, хăйсен нĕрсĕрлĕхĕ çинчен шухăшлать. Вилĕм умĕнче вăл тÿрре тухасшăн, пиччĕшне те ÿкĕте кĕртесшĕн: «Асапланса выртатăп, // Сăнă тухрĕ витĕрех // Кăкăрăма шăтарса. // Мана хамăн айăпшăн // Турă асап ячĕ пуль. // Эй, турăçăм, пиччем те // Ку асапа курминччĕ, // Усал ĕçне тăвиччен // Унăн ăсне çутатсам; // Тăвансемшĕн çапăçма // Тасат унăн кăмăлне; // Вăрçă хушшине кÿртсе // Вĕрилентер чĕрине. // Тăвансемшĕн çапăçса // Тасатсамччĕ айăпне. // Вăл та çаплах, ман пекех, // Шуйттан чури пулминччĕ. // Пиччем, пиччем! Эсĕ те // Суккăр ан юл ман пекех».

Шăллĕн тĕрĕс сăмахĕ пиччĕшне витерейместь, лешĕ пĕтĕмпе Шуйттан ытамĕнче. Тепĕр действире пиччĕшĕ пĕчченех ĕнтĕ. Ун çине пĕтĕм пирĕштисен — этем ăшĕнчи ырăсен ылханĕ ÿкет. Шуйттанĕ чунра ларнăран кăна хăйне паттăр кăтартасшăн вăл. Хăйĕн этем сăнĕ текех çук ĕнтĕ. Шуйттана тухнă вăл. Пĕтĕм çынна хăратса çÿрет. Унран уйрăм Пирĕшти, Шуйттан епле ахăрсан та, таса çынна хăвармасть, вăрçăра вилнĕ паттăрсене, тăвансемшĕн çапăçса пуç хунисене, шăтăка меллĕн хурса, тăпра витет.

К. Иванов шучĕпе, виççĕмĕш, юлашки действире ĕçсем çулталăкран пулнине кăтартмалла-мĕн. Шăллĕн килĕнче тăлăх арăмпа ывăлĕ. Хуйхă. Вăрçă, хăрушă вăрçă чарăннă ĕнтĕ. Кил хуçи çаплах таврăнман-ха. Сасартăк сасă. Шăллĕн сасси пÿрте килсе кĕрет. Тĕн-

черен, пурнăçран уйрăлнă чухне каланă уйрăлу сăмахĕсем вĕсем: «Сĕм пĕлĕтсем юхаççĕ // Çут тĕнчене хуплас пек. // Шуйттан тухать тамăкран // Ман чунăма илесшĕн. // Вилĕм, вилĕм килет ав, // Тăсать хăйĕн аллине. Тамăк çунать ман айра, // Ав шуйттансем килеççĕ, // Эй, турăçăм, çăл мана, // Пĕтме ан пар чунăма».

«Пурте хăраççĕ»,— тенĕ çак вырăнта К. Иванов. Килти çынсем те Шуйттана кураççĕ. Çавă вĕсене хăратса пăрахать те — Майракаллă шуйттан — пиччĕшĕн усал чунĕ. Вăл шăллĕн арăмне те, ывăлне те вĕлерет. Самант кантăкран Пирĕшти курăнать. Вăл каланă «Мĕскĕн этем» сăмах Шуйттана кĕтесе хĕсет. Пирĕшти намăслантарать-тăр ăна, çынлăха таврăнма ӳкĕтлет. Шуйттанĕ, вăйĕ чакнă пулин те, этем ăснепуçне çухатнипе усал тăвасран хăйне чараймасть. Шăллĕн тепĕр ачине те, пӳрте кĕнĕ-кĕменех, вĕлерет, чунне илсе, куçран çухалать. Пирĕшти кил хуралне юлать. Çынри ырă çиеле тухать. Çапларах, тен, вĕçленмелле пулнă та К. Ивановăн «Шуйттан чури» трагедийĕ. Шуйттанпа Пирĕшти çынра мирлешме пултараймаççĕ, этемри ырă унра çĕнтермех тивĕçлĕ. Çак шухăш патне илсе тухать К. Ивановăн «Шуйттан чури» трагедийĕ. Çын усалĕшĕн мул тĕнчи, укçа самани айăплă. Çакна асра тытса çырнă ăна чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Иванов. «Шуйттан чури» трагедие М. Я. Сироткин поэтăн «Нарспи» поэмипе сăвăлла «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă» тата «Тăлăх арăм» балладисемпе пĕр пĕтĕм çыхăнура курать, ăна вĕсен шухăшĕпе кĕвĕллĕ тесе хаклать: «...укçапа мул вăйĕ çынсен танмарлăхне ӳстерет, вĕсене харкаштарать; халăха асап кӳрет, этем ăстăнне пăсать, унăн кăмăлне тискерлетсе ярать». Çакă тĕрĕс тетпĕр. «Шуйттан чури» трагедие хăйне майлă ытарлă формăллă реализмла драма тесе шутлатпăр.

К. Ивановăн ĕмĕтри еткерĕ тата та анлă. Поэт чăвашла çырма та, вырăсларан куçарма та нумай шутласа хунă-мĕн. Пушкинпа Лермонтов, Кольцовпа Некрасов сăввисене вăл ытларах кăмăлланă. Вĕсен уйрăм сăввисене куçарса пăхни, «Кому на Руси жить хорошо» поэмăна чăнласах куçарма тытăнни чăваш халăх поэчĕн талантне, ĕмĕтри хăюлăхне, вăл чăваш поэзийĕн генийĕ пулнине кăтартса парать.

1980.